Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ИЙУН 22 ЙУНКУН 141 (4954) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухаӑ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ

Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Йалта суйлав кампанине отличнӑ вӗҫлемеле!

Колхозлӑ йал суйлавсене аслӑран та аслӑ хастарлӑхпа кӗтсе илет. Социалисӑм идейисем пурнӑҫа кӗнин калама ҫук чаплӑ резулӗтачӗсене совет хресченӗ хӑйӗн пурнӑҫӗн примерӗнче курать. Колхоз стройӗнче телей тупнӑ, Ленин—Сталин партийӗ кулак пусмӑрӗнчен, ҫуклӑхран, тӗттӗмлӗхрен тата кулӗтурӑсӑр пурнӑҫран ҫӑлса кӑларнӑ хресченсемпе хресчен хӗрарӑмӗсем суйлав умӗнхи кунсенче колхоз пухӑвӗсенче телейлӗ пурнӑҫ ҫинчен калаҫаҫҫӗ. Хӑйсен мӗн пур ҫитӗнӗвӗсене, хӑйсен хаваслӑ пурнӑҫне вӗсене коммунисла партипе Совет влаҫӗ туса панине колхозниксемпе колхозницӑсем пӗлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та суйлав умӗнхи пухусенче колхоз хресченӗсем хӑйсем Ленин—Сталин партийӗ тавра пӗтӗрӗнсе тӑни ҫинчен, суйлава пӗр ҫын пек кар пырса, сасӑсене коммунистсемпе партире тӑманнисен Сталинла блок кандидачӗсемшӗн пама хатӗрри ҫинчен пӗлтерсе хушӑшлӑн каласа кӑтартаҫҫӗ.

Совет Сойузӗнчи халӑхӑн ытларахӑш пайӗ—йалсенче пурӑнакансем пулса тӑраҫҫӗ. Кунта суйлавҫӑсен ытларахӑш пайӗ. Йалти политикӑлӑ тата творчествӑлӑ ҫӗклену пӗтӗм суйлав кампанине отличнӑ ирттерме калама ҫук паха условисем туса парать. Ӗҫ—организатӑрсем ҫинче ҫеҫ тӑрать. Ӗҫ—партипе совет органӗсем ҫинче, суйлав комиҫҫисем ҫинче тӑрать, вӗсем йалти мӗн пур суйлавҫӑсене суйлавсене хутшӑнтарма кирлӗ условисене туса пама тивӗҫ.

Тӗрӗслес пулать: суйлавҫӑсене пурне те шута илнӗ-и, вӗсене пурне те спискӑсене кӗртнӗ-и, суйлавсен кунӗ ҫинчен кашни суйлавҫӑна пӗлтермеле, ун ҫинчен татах та татах аса илтермеле—ҫаксем пурте ӗнтӗ халӗ совет органӗсемпе суйлав комиҫҫисен задачӗ пулмала. Хӑшпӗр йултӑшсем ҫапла шухӑшлаҫҫӗ: йалта пурӑнакансем ытла нумайах та мар, пурте куҫ умӗнчех, ҫавӑнпа унта суйлавҫӑсен спискисенче сиктерсе хӑварнисем йе пӑсӑксем сахал пулма пултараҫҫӗ,—теҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах шӑп та шай йалсенчи суйлав участкисенче пит нумай суйлавҫӑсене сиктерсе хӑварнӑ фактӑсем чылай. Ҫапла, Рйазанӗ облаҫӗнчи Горловски районӗнчи Богословски йалсоветӗнче те, ҫав облаҫри Сарайски йалсоветӗнче те спискӑсенче пӗр ик ҫын мар, вуншар суйлавҫӑсене сиктерсе хӑварнӑ.

Хӑшпӗр районсенчи тата облаҫсенчи организацисем, йалта „пурте пӗр-пӗрне йатран тата ашшӗ йатӗнчен пӗлсе тӑраҫҫӗ" тесе шаннипе, организацилӗ-техникӑлӑ ӗҫӗн пахалӑхне хакламаҫҫӗ. Ҫав организацисем йалти кадрсем хуларисенчен сахалтарах хатӗрленнине асра тытмаҫҫӗ. Тӑшманла элементсен йулашкийӗсем, чиркӳ ҫыннисем, троцкисла-бухаринла тата буржуалла-националисла бандан сӗмӗрсе пӗтерейман тымарсем активланнине хӑшпӗр вырӑнсенче манса кайса асӑрхамаҫҫӗ. [illegible] ҫав тӑшмансем суйлавсене организацилӗн ирттерме [illegible] ҫӗрте хӑй мӗн чухлӗ те пулин сийен кӳме хӑтланаҫҫӗ. Тимсӗрлӗхе йалтах пӗтерес пулать, пӳр ҫӗрте те большевикла пысӑк сыхлӑхлӑ пулмалла! Суйлавчен йулнӑ кунсенче йалта суйлав кампанине йертсе пырассине пысӑккӑн вӑйлатмала, организацилӗ тата агитацилӗ ӗҫе анлӑн сарса йамала!

Пӗр кун та вӑраха йамасӑр, участӑксенчи суйлав комиҫҫийӗсен мӗн пур членӗсем валли инструктивлӑ заҫатисем туса иртермелле. Кашни суйлав комиҫҫийӗн суйлавчен кунӗсенчи ӗҫ ҫинчен тӗплӗн туса хатӗрленӗ план пайанах пулмала ӗнтӗ. Участӑксене сасӑлама вӑхӑтра черетсем ан пулччӑр тесе, суйлавсене бюллетеньсене конвертсене памалли вырӑна аста вырнаҫтарасси, вӑрттӑн сасӑламалли кабинӑсене [illegible] суйлав урнисене мӗнле вырнаҫтарасси ҫинчен малтанах тӗплӗн шухӑшласа хурас пулать.

Участӑксенчи суйлав комиҫҫисене пурне те сасӑлани протоколӗсене, шутлав листисене тултарма ли техникӑпа паллаштармалла. Ҫаксем вӗсем пурте кирлӗ, мӗншӗн тесен чылай ҫӗрте халӗ те суйлав участкисен ҫурчӗсене хатӗрлемен.

Халӗхи суйлав кампани колхозсемпе совхозсен уйхирӗсенче хӗрӳлӗ ӗҫ пынӑ тапхӑрта пулса иртет. Парти организацисем, суйлавсене хастарлӑн хатӗрленесси ҫинчен парти кӑтартса панине большевикла йышӑнса, суйлав умӗнхи пӗтӗм агитацине ҫуллахи условисене май пӗлсе туса пыраҫҫӗ. Вӗсем ку ӗҫе уйхире, колхоз станне, трактӑр бригадине куҫарнӑ. Орлов облаҫӗнчи Орлов районӗнчи Лошакова йалӗнче агитатӑрсем суйлавҫӑсем патне уйхире хӑйсем кайаҫҫӗ. Унта вӗсем кӑнтӑрлахи каҫу вӑхӑтӗнче йе ӗҫ хыҫҫӑн колхозниксемпе ҫитес суйлавсем ҫинчен чӗрӗ те интереслӗ калаҫусем ирттереҫҫӗ. Ҫав йалта суйлав умӗнхи агитацие митингсенче тата йатарласа тунӑ пухусенче ирттернипех чарӑнмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, пӗрремӗшӗнчен, вӑл пухусене пыма пур суйлавҫӑсем те мар пултараҫҫӗ тата, иккӗмӗшӗнчен, политикӑлӑ пӗлӗвӗ пур суйлавҫӑсен те пӗр пек мар, тӗрлӗренех пулать. Бормотӑв колхозник пек, Леонӑв агроном пек йалти малта пыракан агитатӑрсем хресченсемпе [illegible] уйрӑмӑн калаҫусем туса ирттереҫҫӗ.

Хӑшпӗр вырӑнсенче парти организацийӗсем суйлавҫӑ-йединоличниксене пӗтӗмпех хисепрен кӑларса пӑрахаҫҫӗ. Йединоличниксем пирӗн ӗнтӗ нумайӑн мар, анчах пирӗн ҫапла тӑвас пулать: вӗсенчен кашнийӗ хӑйӗн гражданин тивӗҫне пурнӑҫа кӗрттӗр. Йединоличниксен хушшинче суйлав умӗнхи агитацине туман, массӑлӑ-политикӑлӑ ӗҫпе кашни хресчене тата кашни хресчен хӗрарӑмне ҫавӑрса илмен парторганизацисем политикӑлӑ йанӑш тӑваҫҫӗ. Лошакова йалӗнче йединоличниксем патне чи вӑйлӑ агитатӑрсене ҫирӗплетнӗ. Ҫавна ӗнтӗ пит тӗрӗс тунӑ!

Шел те, анчах суйлав умӗнхи агитацийе ҫителӗклӗ туса пыманнине кӑтартакан примерсем пит нумай-ха. Куйбышӗв облаҫӗнчи Молотовск районӗнче Смышлҗайӗвск йалсоветӗнче тӗрӗслесен колхозниксем нумайӗшӗ суйлав кунӗ ҫинчен пӗлменни палӑрнӑ. Вӑл ӗнтӗ районри парторганизацисем, суйлавсен политикӑлӑ хакне тивӗҫлӗ вырӑна хуманскерсем, ӗҫлеменрен килнӗ. Ҫав пӗтӗм ҫитменлӗхсене халех пӗтермеле!

Пирӗн йал ҫак кунсенче политикӑлӑ тата творчествӑлӑ ҫӗкленӳпе пурӑнать. Пуйан тырпул ӳссе ҫитӗнет. Социалисӑмлӑ ҫӗрӗҫӗнчи малта пыракансем суйлав кунне уй-хирсенчи ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе паллӑ тӑваҫҫӗ. Суйлав умӗнхи агитацийе вӑйлӑ тырпулшӑн, колхоз стройне малала ҫирӗплетессишӗн кӗрешессипе ҫыхӑнтармала.

„Пирӗн колхоз уйӗсем ҫине пӑхар-ха! Унта пире валли вӑйлӑ тырпул ҫитӗнет. Пирӗн Сталин йултӑшӑн заданине—ҫӗршыва 7—8 миллиард пат тӗштырӑ памала—кӑҫалхи ҫул чипа тултармала. Вӑйлӑ тырпула пуҫтарса кӗме большевикла, стахановла хатӗрленӗр". Ҫапла чӗнсе калать хӑйӗн суйлавҫисене Алексейевски суйлав округӗ тӑрӑх (Воронеж облаҫӗ) РСФСР Верховнӑй Совет депутатне суйлама палӑртнӑ—Чапайӗв йачӗпе тӑракан колхоз правленин председателӗ Афанасий Васильевич Попов. Сталинла блок кандидачӗ ҫапла чӗнсе каланине [illegible] тытӑҫҫӗ: Сталинла тырпул туса илес социалисӑм ҫӗнтерӳсене ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем хушса, хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн хавачӗпе мухтавлӑхне тата ытларах ӳстерӗпӗр.

Хамӑрӑн отечествӑн мухтавлӑхӗпе хавачӗшӗн! Коммунистсемпе партире тӑманнисен Сталинла блокӗ сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене суйлавра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳ тӑвассишӗн!

(„Правда" умстатйи, ийунӗн 21-мӗшӗ, 1938 ҫул, кӗскетсе пичетленӗ).

Таганск районӗнчи (Мускав хули) 456-мӗш № шкулӑн учителницине М. П. Томилинӑна РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑратнӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: М. П. Томилина отличник-учениксем хушшинче. (Сойузфото)

Орджоникидзе йачӗпе тӑракан савӑтри суйлав умӗнхи пуху

М. И. Калинин йулташ тухса сӑмах каланӑ

ЛЕНИНГРАД, ийунӗн 19-мӗш. (ТАСС). Орджоникидзе йачӗпе тӑракан савӑт мӗн иртенпех праҫник чухнехи пек капӑрланнӑ.

Свердловски суйлав округӗнчен РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат Михаил Иванӑвич ҫавӑта килет, текен савӑнӑҫлӑ хыпар часах пӗтӗм савӑтра саралнӑ. Гудок пулнӑ хыҫҫӑн ҫийӗнчех мӗн пур цехсенчен, пайсенчен, стапелсенчен суйлав умӗнхи пухӑва вӗҫӗмсӗр халӑх пухӑнма пуҫланӑ.

М. И. Калинин йулташ трибуна ҫине хӑпарать. РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ хӑйсен кандидатне рабочисем тӑвӑллӑн ала ҫупса тата „урра" кӑшкӑрса кӗтсе илнӗ.

Пухура Йемелйанӑв, Ткаченко, Цуканӑв, Фролов, Попов йулташсем тата партком ҫекретарӗ Балайӗв йулташ сӑмах тухса каланӑ, вӗсем савӑтри суйлавҫӑсене коммунистсемпе партире тӑманнисен никам ҫӗнтерейми Сталинла блок кандидачӗшӗн тата болӗшевикла партин шанчӑклӑ ывӑлӗшӗн, Ленинпа Сталин соратникӗшӗн—М. И. Калинин йулташшӑн сасӑлама чӗннӗ. Ун хыҫҫӑн Михаил Иванӑвич Калинина сӑмах панӑ.

Хӑйӗн сӑмахӗнче Калинин йулташ РСФСР Верховнӑй Совечӗн ҫитес суйлавӗсем мӗнле вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен тата Орджоникидзе йачӗпе тӑракан савӑт коллективӗн задачисем ҫинчен каланӑ.

Калинин йулташ сӑмах каласа пӗтернӗ хыҫҫӑн нумайччен тӑвӑллӑн ала ҫупаҫҫӗ, партин Сталинла Тӗп Комитетне чысласа, Сталин йулташа тата унӑн шанчӑклӑ соратникне М. И. Калинин йулташа чысласа саламласа кӑшкӑраҫҫӗ.

Пурте пӗрсаслӑн йышӑннӑ резолюцире савӑт рабочийӗсем, инженерӗсем, техникӗсем тата служащисем ҫапла каланӑ: „Ийунӗн 26-мӗшӗнче, РСФСР Верховнӑй Советне суйламалли кун, епӗр суйлав урнисем патне вӗҫӗмсӗр хаваслӑхпа пыратпӑр, аслӑ Сталинӑн хастарлӑ соратникӗн йатне, Пӗтӗм Сойузри старастӑн, Питерти ватӑ пролетарийӗн, нумай нациллӗ мӗн пур совет халӑхӗ йуратакан Михаил Иванӑвич Калинин йатне ҫырнӑ хамӑрӑн бӳллетенсене суйлав урнисене йаратпӑр".

„Севкабель" савӑтӗнчи суйлавҫӑсем РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ хӑйсен кандидачӗпе М. И. Калинин йулташпа тӗл пулнӑ

Ийунӗн 20-мӗшӗнче Ленинградри „Севкабель" савӑтри рабочисем, служащисем, инженерсемпе техниксем РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатпа Михаил Иванӑвич Калинин йулташпа тӗл пулас йатпа суйлав умӗнхи митинга пухӑннӑ. Ҫак чаплӑ митинга икӗ пин ытла суйлавҫӑ пынӑ.

Михаил Иванӑвич Калинин президиумра курӑнсан, ӑна нумайччен тӑвӑллӑн оваци туса кӗтсе илнӗ.

— Пайан пирӗн пысӑк савӑнӑҫ,—тенӗ митингра тухса каланӑ ватӑ рабочи Корнейӗв йулташ.—Епӗр кунта хамӑрӑн хаклӑ кандидата, рабочи клас ӗҫӗшӗн ҫирӗппӗн тӑрса ӗҫлекене—Михаил Иванӑвич Калинина саламлатпӑр.

Корнейӗв йулташ пур суйлавҫӑсене те коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗшӗн, аслӑ Сталинӑн ҫывӑх соратникӗшӗн—Михаил Иванӑвич Калининшӑн сасӑлама чӗнсе каласан, митингра пулнисем тӑвӑллӑн ала ҫупнӑ.

Митингра Михаил Иванӑвич Калинин пысӑк сӑмах тухса каланӑ, ӑна нумайччен хыттӑн ала ҫупса кӗтсе илнӗ.

Пуху хыҫҫӑн М. И. Калинин йулташ савӑтри цехсене кайса курнӑ.

(ТАСС).

Шкулсенче пӗлӳсене тӗрӗслемелли испытанисем пӗтнӗ

Ийунӗн 20-мӗшӗнче РСФСР-ти вӑтам шкулсенче вӗренсе тухакан ачасен пӗлӗвӗсене тӗрӗслемелли испытанисем пӗтнӗ. Вуннӑмӗш классем 80 пин ачана вӗрентсе кӑлараҫҫӗ, вӗренсе тухнисенчен нумайӗшӗсем ним испытанисӗрех университетсене, индустри тата педагогикӑ институчӗсене тата ҫар ӗҫне вӗрентекен аслӑ шкулсене вӗренме кӗреҫҫӗ. Аттестатсем парас ӗҫ пуҫланать. Шкулсенчен „отлично" паллӑпа вӗренсе тухнисене аслӑ шкулсене испытани тытмасӑрах вӗренме кӗме права паракан аттестатсем параҫҫӗ.

(ТАСС).

Совет Сойузӗ тӑрӑх

■■ Калинин хулинче резинӑ подошвӑсем тӑвакан Сойузри чи пысӑк савӑтӑн пирвайхи черетри строителӗствипе унӑн монтажне туса пӗтереҫҫӗ. Савӑт малтанхи продукцине туса кӑларнӑ та ӗнтӗ, ӑна атӑ-пушмак тӑвакан хапрӑксене йанӑ.

■■ Мускавра Горький урамӗнче туннел тӑваҫҫӗ. Вӑл Сойузра чи пирвайхи ҫӗрайӗнчи коллектӑр пулать. Туннел туни урамсене пӑсмасӑрах ҫӗр айӗнчи сооруженисене тума май парать. Коллектӑр тӑршшӗ—560 метр.

■■ ССР Сойузӗнчи халӑхсен стрелковӑй спартакиади Мускавра августӑн 20-мӗшӗнче уҫӑлать. Унта сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсенчен, автономлӑ облаҫсенчен кашнинчен икшер командӑ пулмала.

■■ Орджоникидзе йачӗпе тӑракан станоксем тӑвакан савӑтри фрезеровщик Гудӑв йулташ ийунӗн 20-мӗшӗнче ҫӗнӗрен производствӑлӑ рекорд тунӑ. Вӑл хӑйӗн пӗр кунхи нормине 4.630 процент тултарнӑ.

■■ Париж хулине, спорт праҫникне советӑн спорт делегацийӗ тухса кайнӑ, ӑна Францири рабочисен спорт федерацийӗ чӗннӗ.

Делегаци составӗнче—ССР Сойузӗнче футбол вӑййипе малти вырӑна тухнӑ Мускаври „Торпедо" команди тата шывра ишекен совет спортсменӗсем—Семен Бойченко тата Клавдийӑ Алӗошинӑ.

■■ Ийунӗн 20-мӗшӗнче лӗотчик-орденоносец Новикӑв йулташ Мускав—Стокголӗм—Мускав маршрутпа хӑвӑрттӑн вӗҫсе тухнӑ. Стокголӗмпа Мускав хушшине — 1.400 километра—4 сехет те 09 минутра вӗҫсе тухнӑ.

(ТАСС).

Америкӑра Германи шпионӗсене суда параҫҫӗ

Нйу-Йорк хулинче пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче 18 ҫынна суд туса, Германие усӑ тума шпионлӑ ӗҫсем тунӑшӑн айӑпласҫӗ. Вӗсем хушшинче—Германи ҫар министерствин икӗ сотрудникӗ пур.

(ТАСС).

Йут ҫӗршывсенче

Кантон хулине бомбӑсемпе ҫӗмӗрнине хирӗҫ

ТОКИО, ийунӗн 20-мӗшӗ (ТАСС). ССР Сойуз ӗҫӗсен поверӗннӑйӗ Сметанин йулташ ийунӗн 17-мӗшӗнче Йапонин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен вице-министрӗ Хориноуци патне пырса, Йапони ҫарӗ тата уйрӑмах Йапони авиацийӗ Китайри хӳтлӗхсӗр, мирлӗ халӑха тата хӳтлемен мирлӗ хуласене бомбӑсем пӑрахса ҫӗмӗрни пирки асӑрхаттарнӑ. Хӑйӗн зайавленинче Сметанин йулташ уйрӑмӑнах Кантон хулине бомбӑсемпе ҫӗмӗрнине палӑртнӑ, вӑл хулана бомбӑсемпе ҫӗмӗрессе темиҫе ерне хушши пырать ӗнтӗ, унта нумай пин ҫын вилсе пӗтнӗ, вӑл шутран хӗрарӑмсемпе пӗчӗк ачасем пит нумай вилнӗ. Зайавленире ҫапла кӑтартса панӑ: Йапони авиацийӗ Кантон хулине ҫӗмӗрни вӑл—хӳтлӗхсӗр, мирлӗ халӑха хайарран пусмӑрласа ирӗксӗрлени пачах тӳрре кӑларма май ҫук акти пулса тӑрать, Кантон хулине бомбӑсемпе ҫӗмӗрни пӗтӗм тӗнчери цивилизацилӗ ҫӗршывсен обшчӗствӑла шухӑшне, вӑл шутрах Совет Сойузӗнчи обшчӗствӑла шухӑша та калама ҫук хытӑ тарӑхтарса йачӗ. Совет халӑхӗн туйӑмне палӑртса, ССРС правителӗстви тимлӗн, ҫине тӑрсах: Китайри хӳтлӗхсӗр халӑх ҫине тата мирлӗ хуласем ҫине ҫавӑн пек пырса тапӑнассине чарса лартмала, тесе ыйтать.

Чехословакири реакци коммунисла пичете хирӗҫ поход тӑвать

Чехословакири коммунисла партин тӗп органӗ—„Руде право" хаҫат редакцийӗ хаҫата виҫӗ уйӑх срука хупасси пирки официаллӑн асӑрхаттарни ҫинчен илнӗ пӗлтерӗве пичетлесе кӑларнӑ.

Ҫакӑн пирки Чехословакири коммунисла партин Тӗпкомӗ зайавлени пичетлесе кӑларнӑ, унта реакци компартине унӑн тӗп органӗсӗр—реакцине хирӗҫ тата Чехословакин никама пӑхӑнса тӑмасӑр пурӑнассине хӑратса тӑракан фашисла хӑрушлӑха хирӗҫ кӗрешме халӑхсен сарлака массисене мобилизацилекен хаҫатсӑр тӑратса хӑварма хӑтланнине хирӗҫ протестлесе ҫырнӑ. Зайавленире: коммунисла пичете хупассипе хӑратса, ҫав вӑхӑтрах влаҫсем республикӑна хирӗҫ тӑракан генлейнӑвӗҫсен тата фашисла ытти партисен хаҫачӗсемпе журналӗсене пӗр чарусӑр тухма май туса параҫҫӗ,—тесе каланӑ.

(ТАСС).

Германири рабочисен кӗрешӗвӗ

ПРАГА, ийунӗн 19-мӗш. (ТАСС). Германирен рабочисем хапрӑксавӑт хуҫисем чӑрсӑрланнине хирӗҫ, хӑйсен економикӑлӑ пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн кӗрешни вӑйлӑланса пыни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтра Берлинри строителӗствӑ фирмисенче чылайӗшӗсенче рабочисем хыттӑн тӑнипе вӗсен ӗҫукҫине кӑштах ӳстернӗ—пӗр маркӑ та 50 пфеннигран пӗр маркӑ та 80 пфеннига ҫити ӳстернӗ. Нумайах пулмасть пӗр фирмӑри 125 платник ӗҫлеме чарӑннӑ, вӗсем ӗҫукҫи ӳстерме ыйтнӑ. Стачкӑ ҫичӗ сехете пынӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн администрацин ирӗксӗрех рабочисем ыйтнине пурнӑҫа кӗртме тивнӗ. Тепӗр стройкӑра ӗҫлекен рабочисем те хӑйсен ӗҫукҫине ӳстерме ыйтнӑ, ӗҫукҫине ӳстермесен вӗсем ӗҫлеме пӑрахассипе хӑратнӑ. Ҫакӑн пирки виҫӗ рабочине арӗсленӗ те „ӗҫлеме пӑрахнӑшӑн" тесе икӗ ҫул ҫурӑ срука тӗрмере хупса усрамала суд тунӑ.

Ҫак фактсем вӗсем Германири рабочисем, фашиссен террорне пӑхмасӑрах, хӑйсен економикӑлӑ интересӗсемшӗн куллен-кун хыттӑн кӗрешсе пынине кӑтартса параҫҫӗ.

Берлинран пӗлтернӗ тӑрӑх, гестапо (Германири вӑрттӑн полици) столицӑри рабочисем пирки „уйрӑм надзор" тӑвас тӗлӗшпе кирлӗ ӗҫсене тума йышӑннӑ. Берлин хулинчи строителӗствӑ фирмисенче пуринче те гестапон йатарласа уйӑрнӑ агӗнчӗсене лартса тухнӑ, вӗсем провокатӑрсем пулӑшнипе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав провокатӑрсем фирмӑра ӗҫлекен рабочисен шухӑшӗсем ҫинчен пӗрмайах гестапо агӗнтне пӗлтереҫҫӗ.

Йапони авиацийӗ Гуандун провинцинчи хуласем ҫине 1.430 хутчен пырса тапӑннӑ

Иртнӗ ҫулхи ҫентйабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ҫак ҫулхи ийунӗн 14-мӗшне ҫитиччен Йапони авиацийӗ Гуандун провинцинчи (Кӑнтӑр Китай) хуласем ҫине 1.430 хутчен пырса тапӑннӑ, вӗсенчен—Гуандун провинцийӗн столици ҫине—Кантон хули ҫине—425 хутчен пырса тапӑннӑ. Йапони самолӗочӗсем 10.480 бомбӑ пӑрахнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе хуласенче 5.384 ҫурта ишӗлтерсе антарнӑ. Провинцире 4.786 ҫын вилнӗ, мирлӗ халӑх хушшинче 9.000 ҫын ытла аманнӑ. Кантон хулинче кӑна 1.627 ҫын вилнӗ тата 6.720 аманнӑ.

(ТАСС).

Германи фашисӗсен тискер ӗҫӗ

Чехословаки пичечӗ—Германи фашисӗсем Чехословаки территоринче халиччен илтмен тискер ӗҫ туни ҫинчен пӗлтерет. Ийунӗн 17-мӗшӗнче чикӗ урлӑ каҫса кӗнӗ Германи фашисӗсем ҫӗрле фашисӑма хирӗҫ кӗрешекен Иосиф Шмидт йатлӑ хресчен ҫине тапӑннӑ, ҫав хресчен хӑйне фашисла влаҫсем хӗсӗрленӗрен Германирен тухса тарнӑ пулнӑ.

Йунлӑ йӗрсем тӑрӑх тата ытти паллӑсем тӑрӑх ҫакна палӑртса ҫирӗплетнӗ: фашисла бандитсен шайкки, Шмидта пысӑк сурансемех туса, ӑна чикӗ урлӑ Германине ҫӗклесе кайнӑ.

(ТАСС).

Полӗшӑра хресченсене хӗсӗрлеҫҫӗ

Полӗшӑра „Стронництво лӗудовӗ" текен хресчен партин дейателӗсене тата хресченсен забастовкисене хутшӑнчӑ хресченсене хӗсӗрлесси массӑлӑн пуҫланса кайнӑ. Пӗр Жешев хулинче кӑна (Лӗвов войеводстви) округри суд хресченсем пирки пуҫарса йанӑ 1.960 ӗҫ пӑхса тухнӑ, вӑл хресченсене иртнӗ ҫулхи забастовкӑна хутшӑннӑшӑн айӑпласҫӗ.

(ТАСС).

Планериссен рекордлӑ чаплӑ вӗҫевӗсем

ССР Сойузӗн Косарӗв йачӗпе тӑракан Уентрти айероклубӑн спорт комиҫҫийӗ, совет планерисӑмӗн маҫтӑрӗсем пӗтӗм Сойузри планериссен XIII-мӗш ӑмӑртӑвӗнче тунӑ рекордлӑ вӗҫевсен протоколӗсемпе материалӗсене пӑхса тухнӑ.

Совет планерисӑмӗн маҫтӑрӗ Илӗченко йулташ Тулӑ—Ҫерпухӑв—Тулӑ маршрутпа ниҫта анса лармасӑр 151 километр вӗҫнӗ. Вӑл икӗ вырӑнлӑ планер ҫинче вӗҫнӗ.

Карташӗв тата Коротков йулташсем Тулӑ—Черӗ—Тулӑ маршрутпа ниҫта анса лармасӑр 191 километр та 352 метр вӗҫнӗ.

Ҫак вӗҫевсене Уентрти айероклубӑн спорт комиҫҫийӗ кайала старт вырӑнне таврӑнассипе Пӗтӗм Сойузри (нацилӗ) инҫене вӗҫнӗ, рекордлӑ вӗҫев, тесе йышӑннӑ.

Хӗрарӑмсен инҫене ниҫта анса лармасӑр вӗҫессипе Олӗгӑ Клепикӑвӑ планерискӑ вӗҫевне Пӗтӗм Сойузри (нацилӗ) рекорд, тесе йышӑннӑ. Вӑл пассажирсемпе туррӗмӗн 152 километр та 638 метр вӗҫнӗ.

Ҫак пур рекордлӑ вӗҫевсен материалӗсене Пӗтӗм Сойузри рекорд тесе йышӑнма Пӗтӗм Тӗнчери Авиаци Федерацин (ФАИ) президиумне йараҫҫӗ.

(ТАСС).

Ийунĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ

Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн парар!



Михаил Андрейĕвич АНДРЕЙĔВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сĕнтĕрвăрри суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Сĕнтĕрвăрри суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кун коммуниссемпе партирĕ тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕшĕн Михаил Андрейĕвич Андрейĕвшăн сасăлаççĕ.

Андрейĕв йулташ совет влаçĕ вăхăтĕнче вĕренсе пĕлӳ илнĕ. Вăл советăн лайăх специалисĕ тата пултарулă руководителĕ.

Михаил Андрейĕвич хресчен çемйинче, Тăвай районĕнчи Ураскасси йалĕнче 1904 çулта çуралнă. 1932 çулта Мускаври план институтĕнчи йалхуçалăх факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Кун хыççăн план институтĕ çумĕнчи аспирантурăра вĕреннĕ, економикăла наукăн кандидачĕшĕн диссертаци тытнă.

Аспирантурăра вĕренсе тухнă хыççăн М. А. Андрейĕв Чăваш республикине Госпланра ĕçлеме килчĕ. Кунта вăл сводняй планировани сектăрне йертсе пычĕ. Иртнĕ çулхи нойабĕр уйăхĕнченпе Чăваш АССР Госплан председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулса ĕçлерĕ. Кăçал М. А. Андрейĕв йулташа ЧАССР Госплан председателне лартнă.

—о—

Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташшăн сасăлатăп

Епĕ телейлĕ çĕршыври телейлĕ çамрăксенчен пĕри. Епĕ 1913 çулта çуралнă. Мана Совет влаçĕ пăхса ситĕнтерчĕ. Савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр епĕр Аслă çĕршывра.

Патша пусмăрĕ айĕнче темиçе ĕмĕр хушши таптанса пурăннă вак халăхсем савăнăç çулне тупрĕç. Ун çинчен пирĕн Сталинла Конституцире çырса хунă. Вăл пирĕн—ылттăн саккун.

Епĕ учителре 7 çул ĕçлетĕп. Ĕçлетĕп, çав вăхăтрах вĕренсе пыратăп. Пирĕн аслă Ленин: „Вĕренмеле, вĕренмеле тата вĕренмеле",—тенине нихçан та маңмала мар. Малта пыракан совет çĕршывĕнчи аслăлăхăн çитĕнĕвĕсене пĕлмеле. Çавăн пек вĕрентет пире хаклă Сталин.

Учителсене партипе правителствă пысăк ĕç: ачасене коммунисла воспитани парас ĕçе шанса панă. Çак чи ответлă, чи паха ĕçре йуратса ĕçлетĕп. Епĕ анчах мар, пур учителсем хăйсен ĕçне йуратаççĕ.

ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Шăхасан суйлав округĕнче Сталин йулташăн çывăх соратникĕ, парти Тĕпкомĕн çекретарĕ Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташ баллотировкăна тăма килĕшӳ панă. Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташа Шăхасанти суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ.

Епĕ хамăн сасăна ийунĕн 26-мĕш кунĕнче Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташшăн паратăп. А. А. Андрейĕв йулташшăн сасăласа епĕ болшевиксен партишĕн, Совет правителствишĕн, аслă Сталиншăн сасăлатăп. Епĕ ийунĕн 26-мĕш кунĕнче тăван çĕршывăн телейлĕхĕшĕн, пуйанлăхĕшĕн, унăн иксĕлми тĕрекĕшĕн сасăлатăп.

Шăхасанти вăтам шкулта ĕçлекен учител
Дм. Йегорăв.

П. Ç. Полтĕв, Т. В. Ваçилйĕв тата К. Ç. Хабарăв йулташсем суйлавçăсем патĕнче

ЙЕТĔРНЕ. Ийунĕн 14-мĕшĕнче Хучаш йалсоветĕнчи суйлавçăсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра чи малтан „Хĕрлĕ Хучаш" колхоз членĕ Çвешникăв йулташ тухса каларĕ. Вăл суйлавçăсене ийунĕн 26-мĕшĕнче—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕнче—П. Ç. Полтĕв йулташшăн сасăлама чĕнчĕ. Митингра тата Швецов, Кочергинă, Кириллăв йулташсем тухса каларĕç.

Йулашкинчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хучаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат П. Ç. Полтĕв йулташ сăмах тухса каларĕ.

Полтĕв йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çĕршыври ĕççыннисем етемлĕх историнчи чаплă çĕнтерĕве ылттăн сăмахсемпе çырса хучĕç.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне Сталин йулташ кăтартса панă пек, тата хастарлăрах, пĕтĕм совет халăхĕн политикăлла-моралĕ пĕрлĕхне тата ытларах çирĕплетсе ирттермеле. Сирĕнпе пĕрле ийунĕн 26-мĕшĕнче епĕ хамăн сасса, пирĕн пĕрремĕш кандидатшăн, йуратнă аслă учителĕшĕн Сталин йулташшăн паратăп.

Сталин йулташ тата унăн çывăх соратникĕсем Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Йежов, Микойан, Жданăв йулташсем Чăваш республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пани—пĕтĕм чăваш ĕçхалăхĕшĕн пит пысăк чыс, савăнăç пулса тăрат.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Хучаш суйлав округĕнчи ĕçхалăхĕ мана кандидата палăртса ман çине пысăк шанчăк хунăшăн епĕ сире чĕререн тав тăватăп. Есĕр ман çине хунă шанчăка йаланах халăх интересĕшĕн тăрса ĕçпе ответлĕп. Епĕ пĕтĕм хамăн вăйа, пĕлӳве, кирлĕ пулсан пурнăçа та социалисăмлă çĕршывшăн, халăх пурнăçне тата ытларах лайăхлатассишĕн пама пулатăп. Сывă пултăр Сталин йулташ! (Алă çупаççĕ).

**

ÇĔРПУ. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шĕнер суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв йулташ ийунĕн 14—18 мĕшĕсем хушшинче хăйĕн суйлавçисем патĕнче пулчĕ.

Ийунĕн 18-мĕшĕнче Чăрăш Туçра пулнă митингра суйлавçă Петров йулташ тата Т. В. Ваçилйĕв йулташ тухса каларĕç.

Петров йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем, суйлавçăсем! Иртнĕ суйлавра, ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнче, епĕр Сталинла Конституци тăрăх пĕрремĕш хут сасăларăмăр. Вăл кун тĕнчере халиччен пулман суйлав, ССР Союзĕнчи ĕççыннисен чаплă уйавĕ пулса тăчĕ. Иртнĕ суйлавра коммуниссемпе партирĕ тăманнисен Сталинла блокĕ çĕнтерчĕ.

Ийунĕн 26-мĕшĕ те пĕтĕм халăхсен аслă уйавĕ пулат. Вăл кун епĕр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлатпăр. Пирĕн Шĕнер суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ. Тимофей Ваçилйĕвич ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрса ĕçленине пĕлсе, епĕр ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрăмăр.

Йулташсем! Тимофей Ваçилйĕвич вăл хамăр хушăран тухнă, пухăн çын ывăлĕ пулнă. Вăл çамрăклах ĕçлеме пуçланă. Вăл коммуниссен партинче тăрса, халăх тăшманĕсемпе, троцкиссемпе, бухаринĕçсемпе, буржуалă-националиссемпе хайаррăн кĕрешес ĕçре çирĕпленнĕ. Вăл халăх шанăçне тӳррĕн пурнăçлакан çын. Ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса суйлав урнисем патне пырса, Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатшăн Зойа Ананийĕвна Андрейĕва йулташшăн тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шĕнер суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидатшăн Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв йулташшăн сасăлар!

Сывă пултăр коммуниссемпе партирĕ тăманнисен никам çĕнейми Сталинла блокĕ!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин!

**

ШЕМШЕР (телефон тăрăх). Ийунĕн 19-мĕшĕнче Шемшер йалĕнче „Çурлапа мăлатук", „Заря" тата „Майăн 1-мĕш" колхозсенчи суйлавçăсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Суйлавçăсем колхоз клубне пухăнчĕç. Шемшерти „Çурлапа мăлатук" колхоз председателĕ Йегорăв йулташ пысăк пухăва уçса, Тулик-Хураски суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидата Шупашкар райĕçтăвком председателне Н. С. Хабарăв йулташа сăмах пачĕ. Вăл хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ те хăйĕн сăмахне çапла вĕçлерĕ:

— Епĕ малашне те хамăрăн тăван çĕршыва чечеклентерсе, унăн оборонине тĕреклетсе пырассишĕн, халăх тăшманĕсене хирĕç болшевикла çирĕплĕхпе кĕрешсе пыма сăмах паратăп. Есĕр ман çине хунă шанăçа пурнăçлама вăйа хурса ĕçлеме пулатăп!

Тăвай çамрăкĕсем

Тин кăна катăлма пуçланнă уйăх çĕршер çул кашланă кутамас йамрасен тăррисем урлă пăхат. Ку йамрасен айĕнче карталанса вăйă иртнĕ, йаш-кĕрĕмсем кĕслесем калланă; шурă тутăрсем силлесе хĕрсем ташланă, анчах хуйхă тени чĕререн тухман. Çынсем çамрăк пулнă, ватăлнă, çĕре кĕнĕ, пыракиле хĕрсĕсем те çĕрсе йăваннă. Йамрасем çаплах кашланă, халĕ те вĕсем, çил вĕрнĕ чух, вĕççе кайас пекех, шавлаççĕ. Вĕсен халлхипе ĕлĕк шавланинче пысăк уйрăмлăх пур. Çамрăксем, ĕлĕк вĕсен çине пăхса, пĕтĕм кăмăлĕнчен тарăхнă, вĕсем, йамрасем пекех, ирĕклĕн тата хĕн-хура туйми пулассăн шухăшланă.

> Хĕрех пулса ӳсиччен
> Хăрăк турат пулăттăм,
> Кĕрхи çилпе ӳкĕттĕм,
> Çурхи шывпа йухăттăм,
> Пĕве çумне лекĕттĕм,
> Çĕрĕттĕм те пĕтĕттĕм,—

тесе йурланă вĕсем, телей тупман мĕскĕнсем. Кукăр алăлă мар, йенчĕк тулли укçалă мар, чунлă çыншăн пурнăç тути йӳçĕ пулнă. Ахальтен мар пĕр сăвăç çырнă:

> Ех, пурнăç, пурнăç,
> Миçе кăна пăрнăç:
> Хăшне алăк халăпĕ,
> Хăшне тилĕ тăлăпĕ.

Тилĕ тăлăпĕ кулаксен çухисĕнче кăна çӳренĕ, ыттисене ансăр аналсем леккеленĕ, хăшне кĕтӳç чăпăркки, теприсене—çакăр чĕлли ыйтса çынсен алăк хăлăпне хыпаласси,—кулаксен ачисем йыттисене вĕслетнĕ, вара мĕскĕн ыйткалакансем сăхманĕсене çуртара-çуртара тарнă. Çакă пысăк хĕнхура, кулаксен урисен айĕнче лапчăнса пурăннине, выçă кил-çурта пăрахса, кутăмкка çакса аслă çулсем тăрăх утнине кĕскен кăна „пурнăç" тенĕ.

„Пурнăç" тенине епĕр урăхла йăнланатпăр. Пурăнасси—халăх телейĕшĕн тăрасси, пĕтĕм чун-хавалтан кĕрешесси. Халĕ пирĕн аслă çĕршывра суйлавсем пыраççĕ. Грузипе Армени халăхĕсем суйлав кунне—халăхăн уйав кунĕ туса хапăлларĕç. Ийунĕн 26-мĕшĕ чăваш халăхĕн историнче нихçăн никам манми саспаллисемпе çыранса йулĕ, мĕншĕн тесен Аслă Сталинпа унăн çывăх соратникĕсем пирĕн республикăн Верховнăй Советне суйланаççĕ.

Ĕлĕк-авал пĕр-пĕр шăлйĕрен тийек те чăваш халăхĕ çинчен ухмахла ирсĕр анекдотсем сарса çӳренĕ.

Халĕ пире, чăваш халăхне, пĕтĕм тĕнчери аслă çынсенчен чи асли—Сталин йулташ пирĕн республикăн Верховнăй Советне суйланма ăшă та кăмăллă сăмахне парат. Ку хавасларан та хаваслă хыпар пирĕн тăван çĕршыв тăрăх çиçĕм пек хăвăрт сарăлчĕ, пирĕн халăхăн кăмăлне çĕклентерчĕ. Кашни ĕççынни çак хисепе туйса, ийунĕн 26-мĕшне хатĕрленет.

Тăвай йалĕнчи йамрасем шавлаççĕ. Йĕс шăнкăрав пек саслă хĕрсем йамрасем хушшипе утаççĕ, клуб умĕнче çаврăна-çаврăна йурăсем йурлаççĕ. Астăвăр-ха, ĕлĕкрех, йурланă хыççăн вăйă варрине пĕр-пĕр çамрăка кăларсан, ташла та йурла!—тейессĕ пĕрремĕш сăмахĕ.

Чăваш халăхĕн хĕрӳ чĕреллĕ поечĕ чăваш хĕрарăмĕ чăн-чăн çын пулассине шанса сăвăсем çырнăччĕ. Вăхăт çитрĕ. Тăвай йалĕнчи вăйăра пĕр хĕре вăйă варрине чĕнеççĕ. Хĕр хыттăн утса кĕрет. Унтан суйлав çинчен ыйтаççĕ. Хĕр хăйулăн, пĕр такăнмасăр каласа парат, депутата суйланмали кандидатсене—Ворошилăв, Антонăвă, Измайлăв, Родионăвă йулташсен йачĕсене асăнат. Ворошилăв йулташ йатне асăнсанах, пĕтĕм вăйă халăхĕ алă çупни урам тăрăх йанăраса кайат.

Тăвай çамрăкĕсем ийунĕн 26-мĕшне хатĕрленеççĕ. Вĕсем ирхине ирех чи лайăх тумĕсене тăхăнса суйлав çурчĕсене кĕрĕç, халăх ĕçĕшĕн чунтан паранна çынсемшĕн хăйсен сассисене парĕç.

Ухсай Йаккăвĕ.

Тăвай, ийунĕн 18-мĕшĕ.



Йефимийă Борисăвнă Виноградăва—ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Нурăс суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

Пур суйлавçăсене те йавăçтарнă

ЙЕТĔРНЕ. Шăмат йалсоветĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна пысăк çитĕнӳсем, тунипе кĕтсе илеççĕ. Йалсоветри пĕтĕм суйлавçăсем суйлав саккунĕсене вĕренме кружоксене çӳреççĕ. Йалтан урăх ĕçсене кайнисене те йалсовечĕ манса хăвармаст. Халĕ Ӳлăх Шăмат колхозĕнчен 33 колхозник вăрманта ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче кашни кунах агитатăрсем, суйлав саккунĕсене, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен каласа ăнлантараççĕ.

К. Арçенйĕв.

Агит-фургон суйлав участкисенче

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленес ĕçре массă хушшинче политикăлла-агитацилĕ тата кулътурăлла-массăлă ĕçе вăйлатма ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ агит-фургонсем организациленĕ.

Ийунĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа Михайлăва йулташ йертсе пыракан агит-фургон ийунĕн 17-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Ĕмпĕрт Туçа суйлав участкинче пулчĕ. Агитфургон йала çитсен патефон тата радио калаттарма тытăнчĕ. Халăх пуçтарăнса çитсен митинг пулчĕ. Митинга 370 çын ытла пухăннă.

Агитатăрсем пĕтĕм суйлавçăсене ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлав участкине пырса, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, Ленин—Сталин партишĕн, ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн чĕререн тăрса ĕçлекен шанчăклă Андрейĕвапа Ваçилйĕв йулташсемшĕн сасăлама чĕнчĕç.

Митинг хыççăн „Ленин в Октябре" йатлă кино картинă кăтартрĕç.

В. Ваçилйĕв.

Йениçейĕв йулташ суйлавçăсем патĕнче

ШĂХАСАН (хамăр корр.) Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Кипеч суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат Борис Илларионăвич Йениçейĕв йулташ çак кунсенче суйлавçăсем патĕнче пулчĕ.

Чулкăмака суйлав участкинчи суйлавçăсем ăна пысăк кăмăлпа, ăшшăн кĕтсе илчĕç. 500 çын пухăннă митинг пулса иртрĕ.

Митингра колхоз председателĕ Ваçилйĕв йулташ сăмах илчĕ:

— Йениçейĕв йулташа епĕр пурте лайăх пĕлетпĕр. Иртнĕ çулта вăл йаланах пирĕн пата килсе çӳречĕ. Колхозниксемпе калаçаччĕ, пирĕн пурнăç çинчен ыйтса пĕлеччĕ. Вăл пулăшнипе пирĕн колхоз мала тухрĕ. Ĕçкунĕ çине 6 килограм тырпул валеççе патăмăр.

Йениçейĕв йулташа епĕр ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрăмăр. Вăл ĕçхалăх интересĕсемшĕн тăрăшса ĕçлессе шансах тăратпăр.

Колхоз бригадирĕ Йефимăв йулташ Йениçейĕв йулташ пултарулă организатăр, çирĕп болшевик пулнине палăртса çапла каларĕ:

— Йениçейĕв йулташ йертсе пынă МТС республикăра малта пырат. Пултарулă ĕçлекен кадрсем вĕрентсе ӳстерчĕ вăл. Акă, иртнĕ çул Тимофейĕв бригади кашни тракторпа 2.060 гектар сухаланă, Моиçейĕвпа Гаврилăв бригадисем пĕр молотилкăпа 1480 тоннă авăн çапнă. Плана икшер хут ирттерсе тултарнă.

Йениçейĕв йулташ партин шанчăклă ывăлĕ. Çавăнпа епĕр ăна йурататпăр, уншăн сасăлатпăр.

Унтан митингра Йениçейĕв йулташ сăмах тухса каларĕ.

Епĕр суйлатпăр

> Ефир хумĕ тăрăх
> хавассăн та уççăн
> Вĕçет
> çĕн хыпар
> йантратса çĕршыва:
> —„Хĕвеллĕ Армениле
> савăнăçлă Грузи
> Ирпе ирех тухрĕç
> пайан
> суйлава!..
> Пин-пин çухрăм урлă
> епĕ сисрĕм,
> епĕ туйрăм—
> Севан,
> Ереванĕ,
> Тбилиси,
> Батум
> Хăйсем палăртса хунă
> кандидатсемшĕн
> Пĕр çын пек
> хавас
> сасăланă çак кун.
> Çав кун
> кăлентар листинне
> еп шутларăм:
> Суйлав кунĕ çывăх—
> вуниçĕ кунтан
> Тухăпăр пĕр харăс
> епĕр те
> хастаррăн.
> Верховнăй Совет
> суйлама
> хамăртан.
> Суйлав кунĕ
> манăн йуратнă çĕршывăм,
> Пур ирĕклĕ халăх
> савса сасăлат
> йуратнă Сталинщăн—
> мухтавлă çулпуçшăн,
> Вăл—
> пур халăхсен
> малтанхи депутат,
> Телейлĕ кунçулшăн
> епир сасăлатпăр,
> Суйлатпăр
> çĕршывшăн
> тивĕç ывăлъ-хĕрне.
> Суйлав кунĕсем
> мухтавлă та капăр,
> Вĕсен
> чапĕ йулĕ
> ĕмĕрсен тăршшĕне!

Арç. ОРЛОВ.

Сталин йулташшăн сасăлама тивĕçлĕ пултăмăр

Канаш хули. Сталин йулташ пирĕн савăт суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрса, пире, вакунсем йусакан савăтри ĕççыннисене, пысăк хисеп, пысăк чыс турĕ. Рабочисем ку хыпара халиччен нихçăн пулман хавасланăхпа кĕтсе илчĕç. Производствăра социалисăмлă ăмăрту кунран-кун сарăлса, вăйланса пырат. Ӳсет рабочисен политикăлла активлăхĕ, вĕсем суйлав умĕнхи агитаци ĕçне активлă хутшăнаççĕ.

Епĕ савăтри 7-мĕш суйлав участкинче агитатăр пулса ĕçлетĕп. Сталин йулташ пирĕн округра баллотировкăна тăни пирĕншĕн — агитатăрсемшĕн уйрăмах пысăк савăнăç. Епĕ халăхсен аслă çулпуçĕшĕн—Сталин йулташ кандидатуришĕн агитацилетĕп, савăтри ĕççыннисене Сталинăн аслă ĕçĕсем çинчен каласа паратăп.

Рабочисем ман сăмаха тимлĕн итлеççĕ. Пайанхи кун тĕлне епĕ Илйич урамĕнчи суйлавçăсемпе 17 занятти ирттертĕм. Занятисенче рабочисене Сталинла Конституципе суйлав саккунĕ çинчен, рабочисемпе хресченсен ĕлĕкхи тата халъхи пурнăçĕ çинчен, капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕççыннисен пурнăçĕ çинчен каласа панă. Ĕççыннисен ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен каласнă чухне мана вата рабочисем пулăшаççĕ. Ватă рабочисемпе работницăсем каласа пани—вăл чи лайăх агитаци. Пирĕн заңатисем йаланах интереслă, паха иртеççĕ.

Ман пата заңатине çӳрекен 56 çулхи Дмитрийĕв йулташ:

— Спаçибă халăхсен аслă çулпуç Сталина, пире ирĕклĕ, телейлĕ пурнăç панăшăн!—тет, пĕтĕм чĕререн хĕпĕртесе.

Вакунсем йусакан савăтри рабочисен коллективĕ сахал мар паттăр çынсем пăхса çитĕнтерчĕ. Вĕсенчен пĕрине—çамрăк стаханавкка Антонова йулташа халĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Пирĕн 7-мĕш участкăри суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр кăмăллăн суйлава тухса, хăйсен сассисене халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташшăн тата савăтри пур рабочисем йуратакан Антонăвă стаханавкăшăн пама пулаççĕ.

Епĕр Сталин йулташшăн сасăлама тивĕçлĕ пултăмăр. Ку пире малалла тата лайăхрах ĕçлеме, савăтра социалисăмлă ăмăртăвăн хĕрӳлĕхне тата çӳлерех çĕклеме, тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерессишĕн паттăррăн кĕрешме чĕнет.

Канаш савăт суйлав округĕ, 7-мĕш участкăри агитатăр
А. И. Иванов.

ДЖАМБУЛ
Казахстанăн халăх поечĕ-орденоносец

СТАЛИН ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЙУРĂ

> Çилпеле кушăхса, шăрăхпа пăчăхса
> Хирсемпе сăртсенче еп çӳрерĕм пайтах
> Сар хĕвелĕн çуттипе ăшшине шыраса.
> Тăхăрвунă çула çитсе кĕтĕм те, ак,—
> Çав хĕвел ман умма тухрĕ ăшшăн çиççе
> Тĕлĕкри йевĕр тăтăм еп ун умĕнче,
> Ун хĕрӳ вучĕпе чĕреме ăшăтса.
>
> Сталин! Пирĕн çурхи çут хĕвелĕмĕр ес!
> Сан чĕрӳн иксĕлми ăшшипе хĕвĕнсе
> Йешереççĕ хирсем, улăхсем, чечексем,
> Хĕрӳреххĕн тапаççĕ мĕнпур чĕресем.
>
> Çамрăк вăхăт ик тапхăр никамшăн пулман,
> Еп—старик, çӳçĕмсем шурă кĕмĕл пекех.
> Еп сана тахçанах ĕмĕтленнĕ курма,
> Халĕ куртăм та ак çамрăклантăм каллех.
> Çĕнĕрен çамрăк йун, кăмăс пек чăшкăрса,
> Иксĕлми вăй-хăват пачĕ ман чĕрене;
> Курпунланнă шăмшак та тӳрленчĕ пайан,
> Ӳксе пĕтнĕ шăлсем те шăтас çĕнĕрен.
>
> Ĕмĕрнех пусмăрта мăшкăл-хурлăх тӳссе,
> Тăхăрвун çулта тин çамрăкланнă етем
> Саламлат хаљ сана, аслă Сталин атте,
> Чи телейлĕ те ирĕк çынсен йачĕпе.
>
> Тĕттĕме хĕстерсе, мăшкăла тӳстерсе
> Чура тунă пире камчапа[1]) штыкпалан.
> Йытăла çеç усранă пире пуйансем,
> Чĕрери пăлхава пăчлантарнă йалан.
>
> Анчах сĕм тĕттĕме çĕнтерен хĕвел пек,
> Есĕ килтĕн те çăлтăн мĕнпур халăха
> Чи телейлĕ çĕршыв гербĕпе йалавне
> Кар çĕклерĕмĕр епĕр хĕрӳ алăпа.
>
> Хĕвел—Сталин! Нихçăн та ан сӳн Кремĕлре.
> Йурăпа, чĕрепе саламлатпăр сана.
> Етемсем хушшинче çакă çут тĕнчере
> Халăха чи кирлийĕ—вăл есĕ кăна.

И. Тукташ куçарнă.

1936.

[1]) Камча—чĕн саламат.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Отчотпа суйлав пухăвĕн решенисем ĕçре

(Чăвашсен коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕ)

Парти работникĕсен çĕнĕ составĕ тата пирĕн шкулăн пĕтĕм коллективĕ парти пухăвĕсенче кăтартса хăварнисене пурнăçласшăн тимлĕн ĕçлеççĕ.

Чăваш Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнчи пуçламĕш парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ йышăннă решенисене пурнăçлама парткомпа партгруппăсем план турĕç. Партком членĕсемпе преподавательсене партгруппăсем тăрăх çирĕплетрĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ пирĕн пур коммунистем те тата партком членĕсем те партгруппăсене пĕрлешсе тăраççĕ, ĕлĕк пирĕн çак йапала çукчĕ.

Группăсенчи парторгсем партгруппăсем çумне çирĕплетнĕ йулташсем пулăшнипе лайăх ĕçлеме пуçларĕç. Агитатăрсемпе ĕçлесси, ирхине политинформацисем ирттересси тата кулленхи политикăна вĕренесси чылай лайăхланчĕ.

Студентсем пурте хаçат журналсем çырăнса илеççĕ (хаçатсем—190 екземплйар, журналсем—27 екземплйар).

Йулашки курсра вĕренекен студентсем икĕ уйăх хушши практикăла ĕçре пулчĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса килчĕç. Вĕсем хушшинче орденоносец А. В. Табаков йулташ пулчĕ, вăл райплан председателĕ вырăнĕнче ĕçлесе питĕ лайăх характеристика илнĕ.

Практикăра пулман çамрăк студентсем те шкулта парти пухăвĕсем кăтартнисене пурнăçлассишĕн лайăх тăрăшса ĕçлерĕç. Халĕхи вăхăтра пирĕн коллективран суйлав комиççисенче—8 çын, ПСК(б)П хула комитечĕн штатра, тăман инструктăрĕсем пулса участкăсенче—3 çын, агитатăрсем пулса 68 çын ĕçлеççĕ, вĕсем пурĕ 900 суйлавçăна йахăн йавăçтарнă. Агитатăрсенчен уйрăмăнах,— Кириллăв, Йурусăв, Замахăв, Ильйин, Гусков, Ласточкина, Григорйев, Васильйев т. ыт. йулташсем лайăх ĕçлеççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй совечĕсен суйлавĕ йачĕпе шкулта ыйтусемпе ответсен каçĕ пулса иртрĕ.

Çамрăк студентсем вĕренӳре те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, уйрăмăнах I курсри I группă малта пырать. Унта парторг пулса К. Васильйев йулташ ĕçлет. Çак группăра 1938 çулхи I-мĕш квартал тĕлне „отлично“, „хорошо“ отметкăсем 57,5 процент, „посредственно“—38 проц., „плохо“—4,5 процент пулнă пулсан, пайанхи куна „отлично“, „хорошо“—75 проц., „посредственно“—25 проц., „плохо“—пĕрре те çук.

Сталинпа Молăтăв йулташсем аслă шкул работникĕсен канашлăвĕнче калана сăмахсене пур группăсенче те сӳтсе йавнă.

Группăсем пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмла ăмăртса, шкулăн куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавне илесшĕн кĕрешеççĕ.

Халĕ шкулта отличниксемпе ударниксем пурĕ 51 çын шутланаççĕ.

Пирĕн пуçламĕш парторганизаци парти ретне илес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет. Вĕренӳри отличниксемпе ударниксем тата чи лайăх агитатăрсем хăйсем валли рекомендацисем часах тупаççĕ. Пирĕн организаци 1937 çулхи декабĕртен пуçласа пурĕ 36 çын парти ретне илчĕ, вĕсем хушшинче орденоносец А. В. Табаков йулташ.

Сочувствуйушчисен группине 12 çын илнĕ. Пĕр вăхăтра партине кĕме хатĕрленекен йулташсене хăшпĕр коммунистем, „сахайтарах ответлă пулас“ тесе, рекомендаци паманнисем те пулчĕç. Кун пирки йатарласа ăнлантару ĕçĕ туса ирттернĕ хыççăн, ĕç аванланчĕ. Рекомендаци паракансем партине кĕме хатĕрленекенсене пур йенчен те сăнаса пĕлеççĕ. Анчах та парти ретне кĕрекенсене ПСК(б)П хула комитечĕ партдокументсене вăхăтра памасть.

Группăсенчи парти пухăвĕсем пысăк активлăхпа ирттеççĕ.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцин материалĕсене сӳтсе йавса, епĕр пĕтĕм общĕствăлă организацисене IV-мĕш конференци решенисене пурнăçлама çĕклерĕмĕр.

Пирĕн шкул районсем валли тата республика валли йертсе пыракан работниксем хатĕрлет. Унтан çулсерен марксисăм-ленинисăм никĕсĕпе хĕçпăшалланнă çĕнĕ кадрсем вĕренсе тухаççĕ.

Часах ака шкула çĕнĕрен вĕренме илес ĕç пуçланать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне Чăвашсен коммунисла йалхуçалăх аслă шкулне чи лайăх, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене йамала.

Чăвашсен коммунисла йалхуçалăх аслă шкул партком çекретарĕ
М. П. Краснов.

Трак парторганизацин ӳсĕмĕ

ПСК(б) Партин Тĕпкомĕ 1936 çулти çентабĕрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă решенире парти ретне илес тĕлĕшпе татăклă кăтартусем парса хăварчĕ.

Парти ретне илнĕ чухне кашни çынна уйрăмăн пăхса тухмала, кашни çынна тĕплĕн пĕлсе тăмала. Парти ретне парти ĕçĕшĕн, совет влаçĕшĕн чунтан тăрăшса ĕçлекен çынсене илмеле.

Трак райкомĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине тата районри отчотпа суйлав пухăвĕн решенине пурнăçлассипе чылай çитĕнӳсем турĕ. Районри отчотпа суйлав пухăвĕ уйрăмах районра политикăлă-массăлă ĕç çителĕксĕр пирки парти ретне ӳстерес ĕç йапăх пыни çине райкомăн хыттăн çаврăнса пăхмала, тесе кăтартусем парса хăварчĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕсем иртнĕренпе райком 11 çынна çĕнĕрен парти кандидатне илчĕ тата 2 кандидата парти членне куçарчĕ. Çĕнĕрен парти ретне илнĕ йулташсем пурте пекех комсомол ретĕнче пиçĕхсе ӳснĕскерсем, ĕçре йаланах малта пыракансем. Ака сăмахран „Йанмурзино“ колхоз председателĕ Петр Йефремăвич Йефремăв малтан бригадирта ĕçленĕ. Ăна тăрăшса ĕçленине кура колхозниксем пысăк ĕçе—колхоз председательне суйланă, халĕ ăна Чăваш АССР Верховнăй Совечне депутата суйлама кандидата тăратнă. „Йанмурзино“ колхозĕнчен тата икĕ колхоз бригадирне—Хонăв Йегорпа Васильйевă Ульйанăна тата Кисельов Аркадине парти ретне илнĕ.

Мăн Шетмĕ йалсовет çекретарĕ Йакăвлĕв Александр лайăх ĕçленĕ. Ăна района, ответлă ĕçе—райĕçтăвком инструктăрне илчĕç, вăл та парти ретне кĕчĕ. Учителсенчен парти ретне Иванов Павĕла (Кушкăри туллимар вăтам шкултан) тата Уйкас Йунтапа вăтам шкул директăрне Захарăв Лукана илнĕ, вĕсем ачасене коммунисла воспитани парас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Парти ретне ӳстерес ĕçре районри НКВД уйрăмĕ çумĕнчи тата райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем аван ĕçлеççĕ. Халĕ „Большевик“ крахмал савăтĕнчи парторганизаци те парти ретне ӳстерес пирки тимлĕн ĕçлеме пуçларĕ. Кусемпе пĕрлех, йулса пыракан организацисем те пур. МТС-ри парторганизаци ку таранччен те пĕр çынна та парти ретне илмен. Парти ретне кĕме тивĕçлĕ йулташсем МТСтанцинче сахал мар. Заготовкă комиссариачĕн районри уйрăмĕнче пуçламĕш парторганизаци 1 комсомолеца парти кандидатне куçарнипе пысăк ĕç турăмăр, тесе лăпланса ларнă.

Райком пысăк стажлă кандидатсене парти членне куçарассипе чылай ĕçсем турĕ. Районри кандидатсене пухса вĕсемпе 3 кунлăх курс-канашлу туса ирттерчĕ тата парторгсемпе парторг замеçтителĕсен курс-канашлăвне ирттерме хатĕрленет.

ПСК(б)Парти райкомĕн парти ретне ӳстерес йенĕпе татах та вăйлăрах ĕçлемеле. Ку ĕçре пуçламĕш организацисене, уйрăмăнах МТСтанцинчи тата заготовкă комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ çумĕнчи пуçламĕш организацисене хыттăн пулăшса пымала. Çакăн пекех комсомолеçсемпе сочувствуйушчисем хушшинче ĕçлессине йаланах тĕрĕслесе пымала.

Йефимăв.

Парти сиесĕсемпе конференцийĕсенче

Ийунĕн 19-мĕшĕнче Грузири Коммунистсен (большевиксен) Партин XI-мĕш сиесĕ хупăннă. Грузи компартийĕн Тĕпком составне 61 член тата 17 кандидат суйласа хăварнă. Грузири Коммунистсен (большевиксен) Партин Тĕпкомĕн пĕрремĕш членне халăхсен çулпуçне—Сталин йулташа суйлани çинчен пĕлтернине сиес делегачĕсем тăвăллăн оваци туса кĕтсе илнĕ.

Грузири Коммунистсен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕн пĕрремĕш пленумĕ пурте пĕр шухăшлăн пулса Грузи К(б)П Тĕпкомĕн пĕрремĕш çекретарне Л. П. Берийа йулташа суйланă.

* * *

Партин Куйбышĕв облаçĕнчи организацин VI-мĕш конференцийĕ хупăннă. Обкомăн çĕнĕрен суйласа хăварнă составĕн пленумĕ пурте пĕр шухăшлăн пулса ПСК(б)П Куйбышĕв Обкомĕн пĕрремĕш çекретарне Игнатăв йулташа суйланă.

(ТАСС).

Парткабинет ĕçĕсем

(Кӳкеç)

Шупашкар районĕнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕнче парткабинет ĕçне хытă критиклерĕç. Тухса калакан коммунистсем: парткабинетра пропагандистсем валли занятисем умĕн консультацисем организацилеменни çине тата парти активĕ валли тĕнчери лару-тăру çинчен лекцисем вуламанни çине хыттăн кăтартса хăварчĕç. Унтанпа парткабинет хăй ĕçне суйлав пухăвĕ хушса хăварнă пек улăштарчĕ. Малтан консультант пулса ĕçлекенсене тупманнипе ĕç чăрăнса тăраччĕ. Халĕ пирĕн парткабинетра çичĕ консультант.

Консультаци парас ĕçре парти райком çекретарĕсем Никитин, Мальутин, вĕсемсĕр пуçне тата Караушĕв, Иванов, Федăрăв, Çергейĕвă, Ростов йулташсем ĕçлеççĕ.

Консультантсем пропагандистсене тата кружокра вĕренекенсене кашни занйати умĕн пухса тăнланман ыйтусене ăнлантараççĕ. Консультаци организацилени парти вĕренĕвĕн пахалăхне хăпартма пулăшать. Сăмахран, Альгешĕври пропагандис Александрăв кашни занйати умĕн консультацинче пулать. Çавăнпа та унăн вĕренекенсене ответлеймен пĕр ыйту та пулман.

Александрăв кружокĕнче вĕренӳ пахалăхĕ те хăпарчĕ.

Пропагандистсемсĕр пуçне тата кружокра вĕренекенсем те парткабинета çӳреççĕ. Сăмахран, Ростов йулташ йертсе пыракан парти историне вĕренмелли кружокра вĕренекенсем час-часах пырса, пĕлмен ыйтусене консультантсенчен ыйтаççĕ, çавăнпа та вĕсем занйатисенче халĕ лайăх вĕренме пуçларĕç.

Парткабинет районри актив валли тĕнчери лару-тăру çинчен икĕ хутчен лекци ирттернĕ.

Килес виççĕмĕш лекци „Чăвашсен историйĕ“ çинчен пулать, лекцине Григорйĕв йулташ вулать (Партвĕренӳ çурчĕ, Шупашкар).

Кӳкеçри парткабинет пуçлăхĕ
Çергейĕвă.

Çамрăк хĕрарăмсен республикăри II-мĕш сиесĕ

Ийунĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Шупашкарта Пионерсен çуртĕнче Чăваш республикĕнчи çамрăк хĕрарăмсен республикăри II-мĕш сиесĕ уçăлчĕ.

Сиеса ПСÇЛКС Обкомĕн пионерсен пайĕн пуçлăхĕ Моиçейĕвă йулташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

— Пирĕн сиес,—тет вăл,—кала ма çук ответлă тапхăрта пулса иртет. Тепĕр 5 кунтан епĕр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама суйлав участкисене пыратпăр. Пирĕн республикăри ĕççыннисем ийунĕн 26-мĕшĕнче коммунисла партишĕн, халăхсен аслă çулпуçĕшĕн Сталин йулташшăн тата унăн çывăх соратникĕсемшĕн, коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăлаççĕ.

Моиçейĕвă йулташ хĕрарăмсен ĕлĕкхи, патша саманинчи асаплă пурнăçĕ çинчен аса илтерсе, халĕхи телейлĕ те савăнăçлă ирĕклĕ пурнăç çинчен каласа парать.

— Çак пурнăçа пире Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ туса пачĕ, çак пурнăçа пире Совет Сойузĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕ йуратнă Сталин йулташ туса пачĕ.

— Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуç аслă Сталин!

Сталин йулташ йатне асăнсан пĕтĕм сиес ура çине тăрса тăвăллă оваци тăвать. Оркестр „Интернационал“ выльать. Залра: „Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç Сталин йулташ!“, „Спаçибă Сталин йулташа телейлĕ пурнăç туса панăшăн!“, „ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен малта пыракан отрйачĕ.— ПСК(б) Партийĕ сывă пултăр!“, „Урра!“—тесе кăшкăраççĕ.

Унтан сиес 25 çынран президиум суйлать. Президиумра: парти Обком çекретарĕ Г. Иванов, Тĕпĕçтăвком председателĕ З. Андрейĕвă, парти Обком çекретарĕ И. Дубăв, Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Розанăв, парти Обком çекретарĕ Павлăв, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. Спасăв, комсомол Тĕпкомĕн представителĕ Соколовă, ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Т. Моиçейĕвă, ПСÇЛКС Обком çекретарĕ Никифăрăв йулташсем т. ыт. те.

Тăвăллăн алă çупса сиесăн хисеплĕ президиумне Сталин йулташа, Молăтăв, Калинин, Каганович, Ворошилăв, Жданăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов, Чубарь, Хрущчов, Ернст Тельман, Хозе Диас, Косарĕв, Крупскайа йулташсене суйлаççĕ.

5 çынтан çекретариат суйлаçа регламĕнт çирĕплетнĕ хыççăн, сиес кун йĕркинче тăракан ыйту тăрăх доклад тума ПСÇЛКС Обком çекретарне Никифăрăв йулташа сăмах параççĕ.

Никифăрăв йулташ çамрăк хĕрарăмсем хушшинчи воспитани ĕçĕ çинчен тата хĕрарăмсем çине феодалла-крепостникле пăхнин йулашкисене пĕтересси çинчен икĕ сехет хушши доклад турĕ.

С. Константинăв.

Хаçатсене пăхса тухни

Вĕçĕпе вĕçне çыхăнтарма пĕлмесен

Партин йертсе пыракан оргăнĕсен отчотпа суйлав кампани вăхăтĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Çĕнтерӳ çулĕ“ хаçат райкомăн ĕçĕсене çапла хак пачĕ:

„Партин районти организацин класлă сисĕмлĕхĕ лайăх ĕнтерне хурçă хĕлĕх пек (?) туйакан, питĕ лайăх, çивĕч бритвă пек касакан пулчĕ.

Хăшпĕр парти организацисенче отчотлă вăхăтра çав тери нумай пухăнни фактăсене, опытсене, çитĕнӳсене ниçта çырса та пĕтерейменççĕ, каласа пĕтерме те май çук кĕске вăхăтра вĕсене“.

Хаçат парти райкомĕн ĕçне çакăн пек хак пани райкома та, парти организацине те мобилизацилеме пулăшмасть, демобилизацилет анчах. Тата та ытларах, хаçат çырса пĕлтернĕ тăрăх, районта халăх тăшманĕсем йалхуçалăхĕнче, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, культура фронтĕнче тунă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн халĕ те большевикла кĕрешӳ çук.

„Районра укçа-тенкĕ пухас плана майăн 1-мĕшне 17 процент, государствăна аш-какай парас плана 10 процент çеç тултарнă“. Районта пĕр магазин, пĕр лавка тавар çаврăнăш планне тултарман. Çав вăхăтрах хаçат тата унăн редактăрĕ Павлăв йулташ райкомăн темĕнле „бритвă пек вичкĕн сисĕмлĕхĕсем“ çинчен калаçать.

Районра ĕçсем начар пынине хаçат пĕтĕмпех урăх сăлтавсемпе ăнлантарать: „Хăшпĕр йалсоветсем, йалсовет председателĕсем патшалăха тăратмали обйазательствăсемшĕн ответлăх туймаççĕ, ку тĕлĕшпе пыракан кулакла саботажа курмаççĕ, çак саботажа çапса салатас вырăнне хăйсем тӳрех йе урăхла пулăшаççĕ“. Район хуçалăхлă плансене тултарас йенĕпе кайа йулса пынин сăлтавĕ, уйрăм йалсовечĕсем, йалсовет председателĕсем куççене хуйса ларнинчен ытларах районти партипе совет организацисем тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕçе тивĕçлипе тытăнманнинче. Парти организацин большевикла сисĕмлĕхĕ „бритвă пек касакан“ пулнă пулсан, тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕç урăхларах пулнă пулĕччĕ.

Партин Тĕп Комитечĕ парти пухăвĕсенче коммунистсен самоотчочĕсене итлессине сивленĕ. Анчах „Çĕнтерӳ çулĕ“ хаçат йалпо çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци Андрейĕв коммунистăн самоотчотне итленĕ хыççăн решени йышăнманшăн, пур коммунистсен отчотне те итлеменшĕн парторга—Александрăв йулташа вăрçать. Парти Тĕпкомĕ сивленĕ метăда тепĕр хут туртса кăларни, йурăхсăр метăда сарни мĕн тума кирлĕ пулнă?

Хаçатăн парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене тĕплĕн, тăтăшах çутатса пымала, парти организацисен пурнăçне туллин кăтартмала, тĕплĕн анализ тумала. Çавăн пек, тăвас тесен хаçат редакцин хăй тавра коммунистсенчен çирĕп актив тумала.

Р. И. ОÇИПĂВ

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕп ыйтусем

Вĕренӳ çулне пур йенчен те лайăх хатĕрленни пĕтĕм вĕренӳ çулĕ тăршшинче вĕренӳпе воспитани ĕçне пысăк пахалăхпа туса пыма май парать. Иртнĕ çулсенче, кашни çулах тенĕ пек, вĕренӳ çулне хатĕрленесси çителĕксĕр пулса пынă. Çутĕç оргăнĕсенче ларнă халăх тăшманĕсем вĕренӳ çулне хатĕрлессине чăрмантарса пынă. Вĕсем шкулсем валли çĕнĕ çуртсем тăвас плана пурнăçа кĕртесси çинчен шутламан та, учителсене пĕр сăлтавсăрах пĕр шкултан тепĕр шкула, пĕр районран тепĕр района куçарнă, йе сăлтавсăрах ĕçрен кăларса йанă. Шкулсем валли тĕрлĕ вĕренӳ пособисене илес ĕçе организацилемен, учебниксемпе программăсем пичетлесе кăларас плана пурнăçламан. Çав тăшманла ĕçсене пула иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсем учебниксемсĕр, вĕренӳ пособисемсĕр пурăнчĕç. Нумай шкулсенче учителсем çитмен. Паллах, шкулсен ĕçĕн пахалăхĕ çителĕксĕр пулнă.

Вĕренӳ çулĕн малтанхи итогĕсем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсемпе учителсен ĕçĕн пахалăхĕ пачах та çителĕксĕр пулнине палăртаççĕ. 9 район сведени панă тăрăх, IV—VII-мĕш классенче çав класах иккĕмĕш çул хăварнисем 7,2 процент, кĕркунне испытани тытма хăварнисем 13,3 процент. Çапла вăра кĕçĕн класран асларах класа куçнисен хисепĕ 79,5 процент кăна.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси кăçалхи çул та çителĕклĕ пулса пымасть-ха. Çутĕç оргăнĕсенче ĕçлекенсем, шкул пуçлăхĕсемпе директăрĕсем вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре иртнĕ çулсенчи сийенлĕ йăласене пăхăнса пыни палăрать.

Чылай районсенче шкулсем валли çĕнĕ çуртсем тăвас ĕç чăтма çук майĕпе пырать. Кăçал республикăра 17 çĕнĕ шкул çурчĕ тумала, тата иртнĕ çулта туса пĕтерейменнисене 16 çурт туса пĕтермеле. Çĕнĕрен тăвакан 17 çуртран пайанхи куна 11 çурта пурама пуçламан. Шкул строителстви пуринчен ытла Вăрнар, Йĕпреç, Йетĕрне, Трак тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче йапăх пырать. Вăрнар районĕнче Чăрăш Хирлеп шкулĕн çуртне, Йĕпреç районĕнче Буинск поçолкинчи туллимар вăтам шкул çуртне тума пуçламан, Сĕнтĕрвăрри районĕнче Сутчĕвă шкул çуртне виççĕ çултанпа туса пĕтерейменççĕ.

Районри организацисем, пирĕн çитĕнекен çамрăксене вĕренӳ çулĕ пуçланнă çĕре çĕнĕ шкул çурчĕсем туса парас ĕç халăха çутта кăларас ĕçре йепле паллă вырăн йышăнса тăнине астуса тăмасăр, шкул строителстви ĕçне пĕтĕмпех техниксемпе десатниксене шанса параççĕ, вĕсен ĕçне кунсерен тĕрĕслесе пулăшса пымаççĕ. Шкул строителствинчи тăшманла ĕçсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларса пымаççĕ. Шкул строителствинче халиччченех пулса пыракан çӳрĕклĕхе пĕтермеле. Кашни стройкăна çителĕклĕ рабочисем тупса парса, стройкăри ĕçсене икĕ сменăпа туса пымала. Райĕçтăвкомсен шкул строителствинчи ĕçсене кунсерен тĕрĕслесе, пулăшса пымашкăн стройкăсем çумне ответлă çынна, райĕçтăвком президиумĕн членне çирĕплетсе хумала. Çитĕнекен çамрăксене валли вĕренӳ çулĕ пуçланнă çĕре çĕнĕ шкул çурчĕсем туса çитерессипĕтĕм совет общĕствĕн ĕçĕ умĕнче тăракан хисеплĕ задачă.

Кивелерех панă шкул çурчĕсене ремонт тăвас ĕçе пуçламан-ха. Хăшпĕр райĕçтăвкомсем (Йелчĕк) ку ĕçе валли укçа-тенкĕ памаскамаççĕ. Йалсовечĕсем шкул çурчĕсене ремонт тăвасси çинчен шутламаççĕ те. Çитес кĕске вăхăтрах кивĕ çуртсене ремонт тăвас ĕçе туса çитермеле. Райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсен ремонт валли кирлĕ укçа-тенке шкулсене вăхăтра парса пымала.

Шкулсем валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕç те çителĕклĕ мар. Чылай шкулсем вутă хатĕрленĕ, анчах хĕллехи çулпа ăна шкул патне турттарса тухман.

Уйхир ĕçĕнчи хĕрӳ вăхăтсем пуçланиччен кашни шкул 1938—39 вĕренӳ çулне валли çителĕклĕ таран вутă турттарса хумала. Ку ĕçре шкул директăрĕсемпе пуçлăхсен хăйсен ответлăхне манма йурамасть.

Иртнĕ çулсенче вĕренӳ çулне хатĕрленесси пĕр йеннипе, хуçалăх ыйтăвĕсем йеннипе кăна пулса пынă. Учителсене, вĕренекенсене вĕренӳ çулне тивĕçлипе хатĕрлесе çитересси, вĕрентӳ ĕçĕнче кирлĕ плансене хатĕрлесси, вĕрентӳре кирлĕ пособисемпе кĕнекесене туйанасси паллă вырăнта тăман.

Чылай çул хушши шкулсене вĕрентӳ пособисем туйанма паракан укçа-тенке тĕрĕс расхутламан, вăл укçа-тенке урăх çĕре йанисем пулнă. 1937 çулта шкул оборудовани валли уйăрса хунă укçа-тенке 80 процент кăна расхутланă. Вĕрентӳ пособисене илес ĕçре çирĕп йĕрке пулман. Çавна пула шкулсенче халиччен те çителĕклĕ таран пособисем çук, вĕренӳ пахалăхне хăпартас ĕçре ку питех те паллă чăрмав пулса тăрать.

Кăçалхи çул шкул пуçлăхĕсемпе директăрсен, çутĕç оргăнĕсен тĕрлĕ вĕрентӳ пособисене туйанас ĕçе паллă вырăна хумала. Пĕр тăхтаса тăмасăрах районти çутĕç пайĕсене кирлĕ пособисен спискине тăратас пулать. Районри çутĕç пайĕсен пур шкулсенчен те заказ пухса, тĕрлĕ пособисене шкулсене йарса тăмашкăн РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Учсбытпа догăвăр тумала. Çак ĕçе валли кирлĕ укçа-тенке райĕçтăвкомсен пĕр чăрмавсăрах парса тăмала.

Вĕренӳ çулне пирĕн учителсене те, вĕренекенсене те хатĕрлемеле. Кĕркунне испытани тытма хăварнă ачасене учителсенчен пулăшу кирлĕ, вĕсене испытани тытмалли предметсем тăрăх консультаци парса тăмала, кирлĕ учебниксене тупса пама, тăрăшмала. Кĕркуннехи испытанисене расписанине халех туса, ăна кашни вĕренекене пĕлтермеле. Кĕркунне испытани тытма хăварнă вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене вĕсен ачисем мĕнле предметсемпе испытани хăçан тытмалине ăнлантарса памала.

Вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре учителе паллă вырăн памала. Çуллахи вăхăтра учителсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туса ирттермеле. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен учителе çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче мĕнле ĕçлемелли çинчен, учебниксемпе программăсем çинчен, вĕрентӳ планĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса памала.

Учителсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе кăçал Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тĕрлĕ курссем туса ирттерет. Ийунĕн 16-мĕшĕнчен педучилишчăсем çумĕнче пуçламĕш шкулти учителсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе пĕр уйăхлăх курссем ĕçлеме тытăнчĕç. Унта пурĕ 1100 çын вĕрентсе кăлармала. Анчах районри çутĕç пайĕсем, шкул директăрĕсемпе пуçлăхĕсем çак ĕçе хакламанни палăрать. Ийунĕн 16 мĕшĕнче Патăрйел педучилишчине 198 çынтан занйатине 55 учител кăна çитнĕ. Нурăсри педучилишчă çумĕнче курс 177 çынна валли уçнă, ийунĕн 16-мĕшĕнче занйатине 44 çын кăна çитнĕ. Канашри педучилишчă çумĕнчи курса 215 çынтан 28 çын кăна пынă. Вăрмар районĕнчен курса пĕр учител те кайман, Тутаркас районĕнчен пĕр учител кăна пынă.

Туллимар вăтам шкулта вĕрентекенсем валли ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарта тата Йетĕрнере 295 çынлăх курссем пулаççĕ. Ку курссем августăн 15-мĕшĕнчен ĕçлемеле.

Кунсăр пуçне пуçламĕш шкулти учителсене туллимар вăтам шкула ĕçлеме куçарас майпа 185 çынлăх курс пулать.

Çак курссене уйăрса хунă учителсене пурне те вăхăтра занйатине çитересси — çутĕç оргăнĕсен, шкул пуçлăхĕсемпе директăрсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Ийулĕн 1-мĕшĕнче Чăваш Пединститутĕнче заочнă вĕренекенсен çулахи зачотлă сессийĕ пуçланать. Сессине 1500 çынна чĕннĕ. Ку таранччен çутĕç оргăнĕсем, шкул пуçлăхĕсемпе директăрĕсем заочниксен ĕçĕпе çителĕклĕ интересленмен, заочниксен ĕçне тĕрĕслесе тăман. Çавна пула заочниксем хушшинче вĕренӳ ĕçĕ çиелтен кăна пахни, сессине пыманни, зачотсене вăхăтра парса пыманни ку таранччен пĕтмен-ха.

Кăçалхи зачотлă сессине заочниксене пурне те вăхăтра çитерес тĕлĕшпе çутĕç оргăнĕсем, шкул пуçлăхĕсемпе директăрĕсем пур вăйа хурса ĕçлемеле. Заочниксем хушшинче ăнлантару ĕçне, заочниксен ĕçне тĕрĕслесе тăрассине кирлĕ вырăна лартмала. Заочнă вĕренессипе ĕçлемен учителсем хăйсен айăпĕпе туллимар вăтам тата вăтам шкулта ĕçлес правана çухатма пултарассине вĕсене ăнлантарса памала.

Партипе правителствă халăха çутта кăларас ĕçе калама çук пысăк вырăна хураççĕ. Совет шкулĕшĕн, совет учителĕшĕн партипе правителствă кунсерен тăрăшаççĕ, совет шкулне, совет учителне тивĕçлĕ пулăшу парса тăраççĕ. Совет учителĕн ĕçĕ хаваслă, хисеплĕ ĕç пулса тăрать. Çĕнĕ вĕренӳ çулне тивĕçлипе, большевикла хатĕрленсе, çитес çулталăкра шкул ĕçĕн пахалăхне çӳлерех пусăма хăпартар. Шкул ĕçĕнче, халăха çутта кăларас ĕçре халăх тăшманĕсем тунă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене тĕппипех пĕтерер.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр пулар

Тĕрерти (Трак р.) туллимар вăтам шкул 1937—38 вĕренӳ çулне аван вĕçлерĕ. IV-мĕшпе V-мĕш, VI-мĕш тата VII-мĕш классенче вĕренекен ачасене пурне те пĕлӳ тĕрĕслевне тăратнă.

Йулашки тĕрĕслӳ VII-мĕш класра зоологи предмечĕпе ийунĕн 12-мĕшĕнче пулчĕ. Ку предметпа (пурĕ 35 ача) 12 ача „отличнă“ тата „хорошо“ паллăсем илчĕç, „плохо“ паллă илни пĕр ача та пулмарĕ. Анчах VII-мĕш класра вĕренекенсем тăван чĕлхене начар пĕлеççĕ. Çыру çĕнче (диктантра) 10 ача „плохо“ паллăсем илнĕ. Ытти классенче пĕлӳ тĕрĕслевĕ аван тĕслĕхсем панă.

Ийунĕн 13-мĕшĕнче учительсен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура пĕлӳ тĕрĕслевĕн результачĕсене пăхса тухрĕç. VII-мĕш класра вĕренекенсенчен 2 ачана çак класах тепĕр çула хăварнă. Ытти классенче вĕренекенсене пурне те малали класа куçарнă.

Пĕлӳ тĕрĕслевне иртерĕ хыççăн шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнчĕ. Шкул çулне ситтерне ачасене шута илсе тухнă, 1-мĕш класра 21 ача вĕренмелле.

Шкулăн пĕтĕмпе 5 çурт, вĕсенче пурĕ 9 клас пулмалла. Халĕ вăл çуртсене йусама тытăнна, шкул хĕл касмалăх вута кӳрсе ситерет.

К. Михайлăв.

Ман Выла (Елĕк р.) йалĕнче 1938—39 вĕренӳ çулĕнче вăтам шкул вĕçлеме тытăнмала. Шкул строительстви валĕçи йăвăç кӳрсе хатĕрлерĕ. Апла пулин те строительства çĕне тытăнмаççĕ-ха. Ку çĕне Елĕк районĕнчи çутĕç пайĕ те интересленмест.

Й. Кадыков.

Учителсен çĕнĕ кадрĕсем

Ийунĕн 18-мĕшĕнче Çĕрпӳри педучилищĕран 106 çын вĕренсе тухрĕç. Вĕсем пурте ситес вĕренӳ çулĕнчен тытăнса пирĕн республикăри пуçламĕш тата туллимар вăтам шкулсенче учителсем пулса ĕçлеме пуçлаççĕ.

Вĕсем чылайĕшĕ „отличнă“ вĕренсе пынă та „отличнă“ паллăпа вĕренсе тухрĕç. Акă, Нина Михайлăва, Петр Йевграфăв, Галина Иванова, Григорий Табаков т. ыт. „отличнă“ паллă илчĕç. Вĕренӳ отличникĕсене 11 çынна директори канмали çуртсене кайма путевкăсем панă.

Çав вăхăтрах Çĕрпӳри педучилищă çĕнче тĕксĕм йенсем пур. 3-мĕш класри 125 вĕренекентен 106 çын çеç вĕренсе тухрĕç, 19 çын вĕренсе тухаймарĕç. Вĕренсе тухайманнисенчен икĕ çынна иккĕмĕш çула хăварнă, 16 çынна кĕркунне тепĕр хут зачот партармала тунă, пĕрне, начар вĕреннĕшĕн, училищăран кăларса йанă.

Пĕтĕм педучилищăра вĕренекенсемшĕн те вырăс чĕлхи чи кайа тăрса йулнă дисциплинă пулнă. Виççĕмĕш класри 124 çынран вĕрентсе кăлармали испытанисенче вырăс чĕлхипе диктант çырнă чухне 9 çын „отличнă“, 23 çын „лайăх“, 63 çын „посредственно“, 28 çын „начар“ тата 1 çын „пит начар“ паллăсем илнĕ.

Ытти классем тăрах кĕркунне тепĕр хут зачот памала тунисем 26 çын, пĕр класрах тепĕр çул вĕренме хăварнисем 5 çын.

Çак ситменлĕхсем вĕсем педучилищăри педагогсен коллективне килес çулта тата лайăхрах ĕçлеме, пĕр класра икĕ çул вĕренессине йалтах пĕтермеле тума хушат. Çакна тума педучилищăн пур условисем те ситеççĕ.

А. С.

Пионерсен республикăри лагерĕнче

Республикăри пионерсен лагерĕ кăçал ийунĕн 8-мĕшĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Лагерте кашни сменă 12 кун пурăнат. Ийунĕн 20-мĕшĕнче, пĕрремĕш смена хыççăн, иккĕмĕш сменăна 300 пионер лагере ситрĕç.

Валейбол командисем

Шăхасан районĕнчи пуçламĕшпе вăтам шкул работникĕсен районри комитечĕ йалти учителсен хушшинче 7 волейбол командин организациленĕ.

Волейбол командисем пĕр-пĕринне тĕл пулса ăмăртса выљаççĕ. Командăсенчен малта пыраканни вăл—Шăхасанти вăтам шкулти учителсен команди пулат. Ку шкулта 12 учителрен командă организациленĕ. Пурте аван выљаççĕ.

Шăхасан шкулĕ хыççăн Ентриайаљ, Кипеч, Шĕкĕр командисем пыраççĕ.

Дм. Шаљкас.

Н. А. Римский-Корсакăв

(Вилни 30 çул тултарнă тĕле)

Николай Андрейĕвич Римский-Корсакăв вырăс музыки валĕçи калама çук пуйан наследства хăварнă. Вăл вуниккĕ опĕра çырнă (Глинкă, Бородин, Мусоргский, Чайковский тăваттăшĕ пĕрле çырнă чухлĕх), оркестрсемпе симфонисем валĕçи пит нумай произведенисем, сакăрвунна йахăн романссем, ытти пысăк тата пĕчĕк произведенисем нумай çырнă. Вăл талантлă педагог пулнă, хăйĕн ĕçне чун-чĕрипе йуратса туса пынă, ĕçшĕн вăл вăхăта та, вăйне те хĕрхенмен, вăл 200 ученике йахăн вĕрентнĕ. Çав ученниксем хушшинче Глазунов, Љадăв, Аренский, Ипполитăв Иванов, Лысенко, Мясковский, Гнесин, Спендиарăв, Стравинский пек чаплă композитăрсем пулнă.

Римский-Корсакăв музыкант-профессионал çулĕрне сасартăках çуйласа илмен. Тинĕс корпусĕнче ултă çул хушши вĕренсе вăхăта салă панă. Талантлă çамрăк композитăрсемпе—Балакирĕвпа, Мусоргскипе тата Кӳипе паллашса çывхарни çеç Корсакăвăн пуласлăхĕне татса панă. Балакирĕв кружокĕ—пулас „хăватлă ушкăн“—çамрăк композитăра ӳра шухăш панă.

Тинĕс çинчи службăра курни-илтни пуйан пулнă. Матроссемпе кунсерен хайарран калаçни, йатланан тата хĕнени ăна вăл „патша вонне“ пулма пачах йурахсăррине туйтарса илтернĕ („патша вонне“ тесе вăл хăйне мăшкăласа калана).

Композитăр ĕçне тытăнна халлĕх çăн часах Римский-Корсакăв оркестр валĕçи калама çук чаплă произведени—„Садко“ йатлă музыкăлă картинă тăват.

Хăйĕн опĕра творчĕствине Римский-Корсакăв утмăлмĕш çулсен вĕçĕнче „Псковитянка“ йатлă сочинени çырса пуçласа пырат. Римский-Корсакăв утмăлмĕш çулсенчи общĕствăла йухăма хăй илтмесĕр йулманнине тата çав йухăм уншăн пурпĕрех маррине, „хăватлă ушкăнăн“ чи лайăх идейисене вăл тарăнăн йанланса илнине кăтартса панă. Çав опĕрăра Римский-Корсакăв чи вăйлă музыкăна массăлă сценăсенче тунă, унта вăл Псков халăхне кăтартнă.

Хăйĕн ĕçне ытларах та ытларах вĕренсе пыма тăрăшни, тунă çитĕнӳне лăпланса ларасшăн мар пулни—çакăн пек пулнă ĕнтĕ композитăрăн творчĕствипе пахалăхĕсем. „Снегурочка“ опĕрăра (1880 çул) унăн таланчĕ чăннипех чечекленсе кайнă тата композитăрăн мастăрлăхĕ çав тери пысăк пулнă, вăл опĕра хăйĕн çуркуне çутçанталăкри тĕлĕнмеле илемлĕ картинисемпе илĕртет.

1896 çулта çырнă „Садко“ опĕра хăйĕн тымарĕсемпе былинăри епăс патне пырат. Ирĕклĕ суту-илӳ хулин—Новгăрăд хулин—картинисем йумахри пек сценăсемпе тĕлĕнмеле йăнасулă сыхăнса пыраççĕ.

Хăйĕн произведенийĕсенче Римский-Корсакăв вырăс пурнăçĕшĕн, вырăс историйĕшĕн, вырăс халăхĕшĕн паллă событисемпе тинсене уççăн çапласа парат. Вăл халăх пултарулăхĕн пуйан запасĕсемпе—былинăсемпе тата йумахсемпе пысăккăн усă курат.

Римский-Корсакăва, халăх йурри пурпе тăванла пĕрлешсе кайнă калама çук чаплă художник-оптимиста,—совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем йуратаççĕ, культурă пуйанлăхĕнче унăн ĕçĕсене ачашшăн сыхласа усраççĕ.

„МОПР“ колхоз уйхирĕнче

Ирхи çил йăвашшăн вĕрнипе парка ӳсекен ыраш пучахĕсем тата пуç кăлармa тытăннă кĕрхи тулă калчисем пирĕн йĕнеле хумханса пуçĕсене усаççĕ.

— Кăçал ыраш шăркана тĕрĕс ларчĕ. Çак уй-хиртен гектартан 120—130 пăт тĕштырă туса илме шанчăк пур,—тет бригадир, Çтепанăв йулташ.

— Акă кунта 1-мĕш бригадăн 6 гектар тулă вăрлăх участки. Епĕр ăна иккĕмĕш хут çумкураксенчен тасатнă,—тет колхоз председателĕ Олангайĕв, пĕр тикĕс ӳссе пуç кăлармa тытăннă клевĕр çине кăтартса.—Кăçал,—тет вăл,—12 гектар çинчен 25 пин тенкĕлĕх клевĕр вăрри илме шутлатпăр. Пур участкăсенче те колхозăн тырпулсем савăнтараççĕ, куç тулли лараççĕ.

— Кăçал иртнĕ çулхинчен кайа мар, ытларах тырпул туса илме шанчăк пур,—теççĕ колхозниксем. Тырпулсене лайăх пĕр тăккалама сăр вăхăтра пухса кĕрессишĕн тăрăшни кирлĕ.

„МОПР“ колхоз (Ишлей р.) иртнĕ çулта 240 гектар çинчен гектартан 15,2 центнĕр тĕштырă туса илнĕ. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине тăма тивĕçлĕ пулнă. Колхозниксем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса лармаççĕ. Кăçал гектартан 120 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессишĕн „Правда“ тата Свердлăв йачĕпе тăракан колхозсемпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

„МОПР“ колхоз 1938 çулти çуракине пур йенĕпе те пит лайăх иртернĕ. Акмали вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех вутпуççирен тасатнă, йаровизаци туса пур культурăсене те машинăпа акнă.

Кĕрхи тулăна иккĕмĕш хут çумкураксенчен тасатнă. Çуртырисене пĕрремĕш хут çумлама тытăннă. Çумкураксене çумлама звеносем тунă. Анчах звеносене уйрăм участкăсем çумне çирĕплетмен-ха.

Кĕрхи тырăсене 60 гектар минерал çăнăхĕсемпе тата выранти удобренисемпе апат пана. Апат панă вырăнсенче тырпулсем питĕ парка ӳсеççĕ. Иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Курављов опыт туса пăхнă. Пĕр пек çĕр çинчех минерал çăнăхĕсемпе тата выранти удобренисемпе апат панă выранта тулă калчи лайăх ӳсни куранат.

„МОПР“ колхоз килес çулхи вăйлă тырпулшăн хытă кĕрешет. Çĕртме сухине май уйăхĕнчех туса пĕтернĕ. 3000 лава йахăн тислĕк тăкнă. Çак кунсенчех тислĕк кӳписене салатса иккĕмĕш хут çĕртме сухи тума тытăнаççĕ.

Ăса пулакан тырпулсене пухса кĕме хатĕрленесси ответлă ĕç. Анчах „МОПР“ колхоз тырпулсене пухса кĕме начар хатĕрленет-ха. Авăн çапмали машинă 3, вырмали 3 машинă пур. Машинăсем пурте йусавлă мар. Утă çулмали машинăна чылай йусама кирлĕ.

Çавăн пекех тырă хывмали складсене те тасатса дезинфекци туман. Итемсене тасатман. 2-мĕш бригадăн итемĕ çинче ик-виç çулхи кивĕ улăмсем сапаланса выртаççĕ. Ку бригадăн михĕсемпе шăналăксем те çителĕклĕ мар.

„МОПР“ колхозăн тепĕр çитменлĕхĕ вăл, социалисăмлă ăмăрту догăвăрне тунипех лăпланса ларни, ăмăрту догăвăрĕ мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе пыманни. Социалисăмлă ăмăрту догăвăрне тунăранпа пĕрре те тĕрĕслесе пăхман.

Гер. Шчербаков.

Уйа тислĕк кăлараççĕ

** Упнерти (Вăрнар р.) „Апнер“ колхоз çак иртнĕ кунсенче уйа 6250 лав тислĕк кăларчĕ. Колхоз хаљ уйри тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленет. Йалхуçалăх машинисене йусаса лартнă. Витнĕ итемсене йĕркене кĕртнĕ. Ку ĕçсемпе пĕрлĕх колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса çум çумлаççĕ.

П. Çмирнов.

** Тислĕк çĕре çемçетмели йапаласенчен чи хакли пулса тăрат. Уйа мĕн чухлĕ ытларах тислĕк кăларса, унпа тĕрĕс усă куратăн, çавăн чухлĕ вăйлă тырпул туса илетĕн. Пысăк Чăраш йалсоветне кĕрекен (Çĕрпӳ р.) „Пучах“ колхоз 7.520 лав, Вăтă Чăрăшри „Заря“ колхоз 4 пин лав тислĕк уйа кăларчĕç.

Н. Мефодйĕв.

Бригадă хĕрсех ĕçлет

Анат-Ачакри „Çĕнĕ пурнăç“ (Иетĕрне р-нĕ) колхоз кирпĕч туса иртнĕ çулта пысăк тупăш илчĕ. Кăçал колхоз кирпĕч тăвас ĕçе татах вăйлатса йачĕ.

Кирпĕч тума 10 çынран бригадă организациленĕ. Бригадă халĕ хĕрсех ĕçлет. Пайанхи куна 75.000 кирпĕч çапнă. Бригадăра 10 çын пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ĕç нормине кашнийех 150—200 процент тултараççĕ. Акă, Петров тата Çтеклов йулташсем нормă тăрăх 400 кирпĕч çапас вырăнне, 609—700 кирпĕч çапаççĕ.

П. Шоркин.

Сат ăстаçисем

Çĕрпӳри колхоз çамрăкĕсен шкулĕ çумĕнчи сат ăстаçисен 10 уйăхлăх курсĕнчен ийунĕн 18-мĕшĕнче 18 çын вĕренсе тухрĕç. Курсра вĕреннисем хушшинче 10 хĕрарăм, 8 комсомолĕц.

Сат ăстаçисем харпăрхăй колхозне садовод-бригадир пулса ĕçлеме саланчĕç.

А. Иванов.

Тутар республикĕн делегацийĕ Чăваш республикĕнче

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе Тутар, Чăваш тата Мордва республикĕсем хушшинче тунă социалисăмлă ăмăрту догăвăрне çуракинче мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслеме Тутар республикĕнчен делегаци килнĕ.

Делегаци пуçлăхĕ—Тутар АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Йонăв йулташ.

Делегацири йулташсем: Фафрутдинăв—Буденовски МТС трактăр отрйачĕн бригадирĕ, Шарафутдинăв—орденоносĕц, Буинскинчи МТС машинисĕ, Файфутдинăв—Сăмански МТС директăрĕ, Минихайăв—Шереметйевски районри Нижне-Уратмински йалсовет председателĕ, Чумаков—Ново-Писмйански районри йалсовет председателĕ, „Красная Татария“ тата „Кзыл Татарстан“ хаçат представителĕсем тата ыт. те.

Епĕр делегаци районсене тухса кайрĕ.

Иккĕмĕш колхоз театрĕ—Шупашкарта

Чăвашсен Патăрйелĕнчи иккĕмĕш колхоз театрĕ Шупашкара килчĕ. Çак театр хăй ĕçлеме пуçланăранпа Патăрйел, Йелчĕк, Шăмăршă, Турхан т. ыт. районсенчи çĕршер колхозсенче спектакăљсемпе концертсем лартса панă. Театр коллективĕ пултарулă çамрăк артиссем сахал мар вĕрентсе ӳстернĕ.

Театр Чăвашсен Академилĕ Государствăн Театрĕнче икĕ спектакăљ лартат: ийунĕн 22-мĕшĕнче П. Н. Оçипăв драматургăн „Айдар“ пйесине тата ийунĕн 23-мĕшĕнче М. Беловăн „Тупа“ пйесине выљаса парат. Постановкăсене В. П. Фролов йертсе пырат.

Ийунĕн 24-мĕшĕнче театр концерт парат. Концерт программинче Н. Айзманăн „Çӳпçипе хупăлчи“, музыкă тата хор, соло, дуэт, трио, декламацисем, ташăсем пулаççĕ.

Савăтри хор

Канашри вакунсем йусакан савăт клубĕ çумĕнчи рабочисен хорĕнче 60 çын тăрат. Хора Нечайĕв йулташ йертсе пырат.

Пĕр уйăх хушшинче пирĕн хор чăвашла йурăсем 8, вырăслисем 4 вĕренчĕ. Епĕр савăтри рабочисене концертсем лартса паратпăр.

Кăçал Мускавра чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри олимпиади пулат. Олимпиадăна кайма епĕр „Колхоз ачисем“, „Туçа хĕрĕсем“, „Тухат-и те тухмаст-и“ йурăсемпе „Линкка-линкка, авкаланма“ йатлă ташă кĕвви тата вырăсла „Если завтра война“, „Казачья песня“, „Москва майская“ йурăсене лайăх вĕренсе хатĕрленетпĕр.

Пирĕн хорта савăтри чи лайăх стахановкă—Канаш суйлав округĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Йекатеринă Антонăвна Антонăвă йулташ тăрат. Хор коллективĕ çакăншăн чĕре тулли кăмăлпа савăнат.

Хорист П. Йефимăв.

Ацидофилпа йӳçĕтнĕ сĕт—çамрăк выљăхсемшĕн чи усăлă апат

Йӳçĕтнĕ сĕт вар-хырăмшăн усăлине тахçантанпах пĕлеççĕ. Вырăс учоннайĕ Мечникăв йӳçĕтнĕ сĕт мĕншĕн усăлă пулнине çапла ăнлантарса парат: йӳçĕтнĕ сĕтре сĕт йӳçекен бактерийĕсем пулаççĕ, çав бактерисем вар-хырăмра сĕт йӳçекĕ тăваççĕ, вăл вар-хырăмра пулма пултаракан тĕрлĕрен сийенлĕ бактерисене пĕтерме пулăшат.

Йӳçĕтнĕ сĕтре сĕт йӳçекĕ вырăнне ацидофил текен бактерисем ĕрчетсен, йӳçĕтнĕ сĕтĕн усси татах пысăкрах пулнине пĕлни нумайах та пулмаст. Ацидофил вăл йӳçек йуратакан тенине пĕлтерет, мĕншĕн тесен вăл йӳçек пур çĕрте аван ĕрчет. Ăна хаљ йатарласа сĕт йӳçĕтнĕ çĕре йама Совет Сойузĕнче уйрăм лабораторисенче туса кăлараççĕ.

Аслăлăх учрежденийĕсем тĕпчесе пăхнă тăрăх, çавăн пекех тата Чăваш республикĕнчи опытсем кăтартнă тăрăх, çамрăк выљăхсене ацидофилпа йӳçĕтнĕ сĕт парса апатлантарни пит усăли куранат. 1937 çулта пирĕн республикăра чылай районсенче—пурĕ 63 колхоз ферминче çамрăк выљăхсене, пăрусемпе сысна çурисене, ацидофил йарса йӳçĕтнĕ сĕт çитерсе усраса пăхнă. Çав фермăсенче пуринче те çамрăк выљăхсем лайăх ӳсни паларнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шупашкар Ĕсмĕл колхозĕн сысна ферминче ацидофилла сĕт çитерме тытăниччен чĕчĕ ĕмекен çурăсем пит нумай вилнĕ. Пĕр квăртăл хушшинче пурĕ 36 çурă вилнĕ пулнă. Тепĕр квартăлĕнче, ацидофилпа йӳçĕтнĕ сĕт çитерме тытăнсан, çурăсем вилни сахал пулнă—мĕн пурĕ те 3 çурă çеç вилнĕ. Çав районрах Çĕнĕ Салапа Амачкинăри колхозсен ĕне фермисенче йӳçĕтнĕ сĕт пама тытăннă хыççăн 6—7 кун хушшинчех начар пăрусем чĕрĕлсе кайса талăкра 400—500 грам хутшăнакан пулнă.

Çĕрпӳ районĕнче иртнĕ çулта пурĕ 16 колхозра сысна çурисене ацидофил йарса йӳçĕтнĕ сĕт çитерни пит усăлă пулнине кăтартрĕ. Çавăн пекех Йетĕрне, Ишлей тата ытти районсенчи опытсем те, ацидофил йарса йӳçĕтнĕ сĕт çитернĕ хыççăн çамрăк выљăхсем вилни тата чирлени те сахалланнине, выљăхсем лайăх ӳснине кăтартса параççĕ.

Ацидофил йарса йӳçĕтнĕ сĕт çамрăк выљăхсемшĕн усăли çакăнтан килет: ацидофил бактерийĕсем выљăхăн вар-хырăмĕнче сĕтри сахăра йӳçĕтсе, вар-хырăма пăсакан чир бактерийĕсене ĕрчеме чараççĕ. Çавăнпа та пĕтĕм организăм лайăх ĕçлет, выљăхăн чĕр виçи те хăвăрт хутшăнат, выљăх сывă пулат.

Ацидофил йарса йӳçĕтнĕ сĕте кашни фермăрах хатĕрлеме май пур. Çав ĕçри чи кирлĕ услови вăл—тасалăх.

Ацидофиле лабораторисенче хатĕрлеççĕ; вăл типĕ халĕн те, шĕвек халĕн те пулат. Пуринчен ытларах типĕ халĕн хатĕрленипе усă кураççĕ. Лабораторинчен илнĕ ацидофилрен чи малтан ацидофил çĕпри тăваççĕ. Çĕпре тума ăна икĕ хут йӳçĕтеççĕ. Малтан 2,5 литр таса сĕт илсе лудит тунă савăт ăшĕнче çур сехет хушши Цељси градусникĕпе 92—96 градус таран ăшăтса, тăраççĕ йе 10 минут хушши вĕретеççĕ. Çавăн хыççăнах çав сĕте сивĕ шыв йана каткана лартса 43 градуса çити сивĕтеççĕ. Сивĕтнĕ хыççăн сĕт çине 15 грам ацидофил порошокне йарса вĕрекен шывра çунă мутовкăна пăтратаççĕ. Çавăн хыççăн вара сĕт савăтне тĕплĕн çуса тасатнă марљăпа темиçе хут хуçлатса çыхаççĕ те, 40 градус таран ăшă шыв çине лартаççĕ. Пĕр сехет иртсен савăтри сĕте тепĕр хут пăтратаççĕ, татах тепĕр сехет иртсен йулашки хут пăтратса йӳçĕтме лартаççĕ. Çĕпре йанă хыççăн сĕт 16 сехет иртсен йӳççе çитмеле.

Сĕт йӳççе çитсен ăна температурă 8—10 градус тăракан вырăна лартмала. Ăна, çĕпре пулса çитсен 12 сехет вăхăт иртиччен, урăх сĕт çине йарса татах йӳçĕтмеле. Çĕпре йарса иккĕмĕш хут сĕт йӳçĕтнĕ чух, выљăхсене çитерме кирлинчен 5 процент таран çеç сĕт илмеле. Самахран, выљăхсем валљи пурĕ 100 литр сĕт кирлĕ пулсан, 5 литр сĕт илсе çур сехет хушши 92—95 градуса çити вĕриетсе тăмала та (йе 10 минут хушши вĕретмелĕ), сивĕ шыв çине лартса 45 градуса çитиччен сивĕтмеле. Çавăн хыççăн вара малтан хатĕрленĕ çĕпрене кашни литр сĕт çине 50 кубла сантиметр йарса пăтратмала. (Çĕпрене иличчен малтан çийелтен 2—3 сантиметр хулăмĕш тимĕр куркапа илсе пăрахмала). Кайран вара, малтанхи хут çĕпре тунă чухнехи пекех, çав сĕт савăтне çыхса 40 градус таран ăшă шыв çине лартмала. Пĕр сехет иртсен тепĕр хут пăтратса йӳççе хытиччĕнех лартмала. Ĕçе тирпейлĕ тунă пулсан сĕт 5—6 сехетрен йӳççе те çитет. Вара ăна ăшă шыв çинчен илсе выљăхсене çитермели сĕт йӳçĕтме тытăниччен температурă 8—10 градус тăракан вырăна лартмала. Çĕпре йанă хыççăн 12 сехет иртиччен çав иккĕмĕш хут тунă çĕпрепе выљăхсене çитермели сĕте йӳçĕтме тытăнмала пулат.

Выљăхсене çитермели сĕт йӳçĕтме таса сĕте йе çепаратăр витĕр кăларнă сĕте малтан 92—95 градус таран ăшăтса тăраççĕ, йе 10 минут хушши вĕретеççĕ. Çавăн хыççăн хăвăрт 45 градуса çити сивĕтеççĕ. Çавăн чухлĕ сивĕтсен вара иккĕмĕш хут тунă ацидофил çĕприне сĕт хисепĕнчен 3—5 процент (100 литр сĕт çине 3—5 литр) илсе сĕт çине йараççĕ. Çĕпре йанă хыççăн савăт çине марљă витсе çыхса хураççĕ те 40 градус ăшă тăракан шыв çине лартаççĕ. Çавăн хыççăн пĕр сехет иртсен сĕте тĕплĕн пăтратаççĕ те йӳçиччĕнех тĕкĕнмесĕр лартаççĕ. 4—5 сехет иртсен сĕт йӳççе те çитет, вара ăна выљăхсене çитериччен температурă 8—10 градус тăракан вырăна лартаççĕ. Малала вара, выљăхсене çитермели сĕте çав ацидофиллĕ йӳçĕ сĕте йарсах йӳçĕтме пулат (15—20 хутчен).

Йӳçĕтнĕ сĕте выљăхсене паричченех малтан 30—35 градуса çити ăшăтма кирлĕ. Пăрусене тата сысна çурисене те çав йӳçĕтнĕ сĕте пĕчĕккĕн парса пырса хăнăхтармала. Малтанхи кун пăрусене 100 грам таран парса 20-мĕш куна çитнĕ çĕре пĕр литра çитермеле. Сысна çурисене сахалтарах: 5—8 кунхи çурăсене 30-шер грам пама тытăнса уйăх тултарнă тĕле 150 грам таран пама йурат.

Ацидофилпа йӳçĕтнĕ сĕт çитерсе 1937 çулта опытсем туса иртерни çакăн пек вывăдсем тума май парат:

1) Çамрăк выљăхсене ӳстерес ĕçре ацидофилпа йӳçĕтнĕ сĕтпе кашни колхоз ферминче усă курма тăрăшмала, йӳçĕтнĕ сĕт (простокваша) çамрăк выљăхсене вилесрен тата чир-чĕртен сыхлат;

2) Йӳçĕтнĕ сĕтпе кашни колхозрах усă курма май пур, сĕт йӳçĕтес ĕç ытлашши кăткăс ĕç мар.

Ацидофил туйанас текен колхозсен халех районри çĕрĕç пайĕсене зайавкăсем парсан, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ урлă илме пултараççĕ. Районри тата участкăри зоотехниксен çак ĕç çине хытă çаварăнса пăхмала, вĕсен колхозсенче çамрăк выљăхсене ацидофилпа йӳçĕтнĕ сĕтпе апатлантарса усрас ĕçе пуçарса йарса, тивĕçлипе йертсе пыракансем пулмала.

Зоотехник И. Йонăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Пайан кинотеатрта	Саслă, илемлĕ, пысăк, çĕнĕ фильм „БАКИНЦЫ“. Çеанссем—6 сех. 30 мин. 8 сех. 30 мин. тата 10 с. 30 мин. пуçланаççĕ. Кассă кăнтăрла 2 сехетрен усă.

Голодйаихăри „14 лет Октября“ йатлă колхозра

пырса йернĕ лаша пур

Тĕсĕ—сутă турă, çамки çинче шурă, кайри сулахай ури пакăлчак таран шурă, ĕнерчĕк вырăнĕ икĕ, йенĕ те шурă, çилхи сылтăм йенеле.

Адрĕс: д. Голодйаиха, Чебоксарского р. колх. им. „14 лет Октября“.

ССР Сойузĕн Вăрман Халăх Комиссариачĕн

Сарапулри автомеханиксене вĕрентсе хатĕрлекен техникум

Автотрактăр уйрăмне вĕренме кĕме ийунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа зайавленисем йышăнат. Условисене почтăпа йараççĕ.

Адрĕс: город Сарапул, УАССР ул. Гоголя 34. Механический техникум.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 306

Кар. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 660.